ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Февраль 11 юнкун № 29 (8938)

35-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Суйлавçăсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатар! (1 стр.).
КОММУНИСТСЕМПЕ ПАРТИРЕ ТАМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН КАНДИДАЧĔСЕМ: В. Наумов.—Пултаруллă руководитель (2 стр.).
КОНСУЛЬТАЦИ: Д. Митьков.—Сасăламалли йĕрке (2 стр.).
ФЕЛЬЕТОН: Н. Цветков.— Çăвар карса ларакансем (2 стр.).
Юрий Илюхин.—Сталинла саманана тивĕçлĕ музыкăшăн (3 стр.).
А. Григорьев, Е. Афанасьев.—Выльăх-чĕрлĕхе начар пăхаççĕ (3 стр.).
И. Смирнов.—Вăрманпромхозсен шалти резервисем пирки (3 стр.).
Халăхăн политикăллă консультативнăй совечĕн Пĕтĕм Китайри комитечĕн сессийĕнче. Мао Цзе-дун тухса калани (4 стр.).
СССР-па Финлянди тата Норвеги хушшинчи протокол çине алă пуснă (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
К. Иванов.—«Айдар» драма 25 çул театр сцени çинче (4 стр.).

Финанс планне ăнăçлă тултарассишĕн

Пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв хăйĕн хуçалăхĕпе культури вăйлăн ӳссе пынă тапхăрта пурăнать. Совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, çĕнĕ те çĕнĕ çĕнтерӳсем патнелле пырать. Пирĕн ĕçсыннисем партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн, коммунизм тăвассишĕн чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ. Халĕ пирĕн çĕршывра пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнчи плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту кунтан-кун сарăлса пырать.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ирттерсе тултарма çĕршыв хуçалăхĕн мĕнпур ресурсĕсене мобилизацилемелле. Çакă вара социализмлă накоплениене ӳстерсе пыма, государство бюджетне, республикăн, районсен, хуласен, ялсен бюджечĕсене пĕр тикĕс пурнăçласа пыма, хуçалăхпа культура строительстви валли яланах вăхăтра укçа-тенкĕ парса тăма хушать.

Иртнĕ çулта пирĕн республика бюджечĕ тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те пурнăçланса çитмерĕ. Финанс органĕсен çакăнтан тивĕçлĕ вывод туса, кăçал бюджета кирлĕ пек пурнăçласа пыма пур майсемпе те туллин усă курас пулать.

Государство бюджетĕнчи укçа-тенкĕн пысăкрах пайĕ социализмлă хуçалăхăн тĕрлĕ отраслĕсенчен пухăнать. Хуçалăхран бюджета укçа-тенкĕ яланах пĕр тикĕс пухăнса пырасси кашни предприяти бюджет умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслă пурнăçласа пынинчен килет. Производство планне вăхăтра тултарса пымалла, ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, продукци пахалăхне лайăхлатмалла, тата унăн хăйне ларакан хакне йӳнетмелле, производство тăкакĕсене чакармалла, брака пĕтермелле. Хуçалăха пĕлсе ертсе пыни, пур çĕрте те перекетлĕх режимне çирĕп тытса пыни кирлĕ.

Пирĕн республикăри пысăк предприятисенчен чылайăшĕ хăйсен планĕсене ăнăçлă тултараççĕ, бюджета тивĕçлĕ укçана та вăхăтра парса тăраççĕ. Çав вăхăтрах вырăнти промышленноçпа апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем хăйсен планĕсене тултарса пымаççĕ, çавăн пирки бюджета хывмалли укçана та парса татаймаççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта бюджета 1.224 пин тенкĕ парса çитермен. Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăпа Улатăрти атă-пушмак фабрики уйрăмах начар ĕçленĕ, вĕсен ĕçĕнче убыток пулнă, вĕсен бюджет умĕнчи парăмĕ те пысăк. Çакă вара асăннă предприятисен директорĕсем Писаревăпа Дембицкий юлташсем хăйсене шанса панă ĕçшĕн ответлăха туйманнинчен килнĕ. Автотранспорт управленийĕн предприятийĕсем те бюджета тивĕçлĕ укçаран 763 пин тенкĕ парса татайман. Çавăн пекех суту-илӳ предприятисенчен нумайăшĕ бюджета укçа-тенкĕ хывмалли плансене тултарса пымаççĕ. Çак предприятисен ĕçне лайăхлатни, вĕсене ертсе пыракансен ответлăхне ӳстерни кирлĕ. Хуçасăрлăха хирĕç, укçа-тенкĕпе перекетлĕн усă курманнине хирĕç татăклăн кĕрешмелле. Кашни предприяти тата суту-илӳ организацийĕ бюджета пама тивĕçлĕ укçа-тенке вăхăтра парса пытăр.

Юлашки вăхăтра райисполкомсен финанс пайĕсенчен чылайăшĕ государство тупăшĕсен планĕсене тултарас ĕç çине тимлĕрех пăхма пуçларĕç. Кăçалхи январь уйăхĕнче пĕрремĕш кварталта государство тупăшĕсене пухмалли плана Кувакино районĕнче 84 процент, Етĕрне районĕнче—80 процент, Йĕпреç районĕнче 64 процент тултарчĕç. Çав вăхăтрах, пĕтĕм республикипе илсен, государство тупăшĕсен планне пурнăçлас ĕç кирлĕ пек пулса пымасть.

Финанс органĕсен предприятисемпе суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрассине лайăхлатмалла. Хуçалăх планĕсене тултарнине тата перекетлĕх режимне тытса пынине тенкĕпе тĕрĕслесе тăрасси вăл—финанс органĕсен ĕçĕ. Çак ĕçе вăйлатас пулать.

Бюджетра халăхран пухăнакан укçа-тенкĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хуласемпе районсен финанс пайĕсем çак ĕçе оперативлă тата конкретлă ертсе пынă, социализмлă ăмăртăва лайăх организациленĕ, активпа тачă çыхăнса ĕçленĕ çĕрте укçа-тенкĕ пухмалли план ăнăçлăн пурнăçланса пырать.

Муркаш районĕ иртнĕ çулхи бюджета пур енĕпе те пурнăçларĕ. Кунта налог агенчĕсем, заем уполномоченнăйĕсем тата ялти активистсем колхозниксене совет çĕршывĕн çитĕнĕвĕсем, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен, государствăна тивĕçлĕ укçа-тенке хăвăртрах парса татма кирли çинчен калаçусем ирттереççĕ. Район тата ял Совечĕсен сессийĕсенче тата исполкомсен ларăвĕсенче ку ыйтăва час-часах сӳтсе яваççĕ. Финанспа бюджет комиссийĕсем халăхран укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Республикăри малта пыракан районсемпе ял Совечĕсен опычĕнчен финанс планне пур çĕрте те ăнăçлă тултарса пыма май пурри курăнать. Анчах хăшпĕр районĕнчи финанс пайĕсем тата ял Совечĕсем сӳрĕккĕн ĕçленĕ пирки республикăра халăхран укçа-тенкĕ пухмалли план начар пурнăçланса пырать. Кăçалхи январь уйăхĕнче те, иртнĕ çулти пекех, укçа-тенкĕ пухас ĕçре чи кайри—Хĕрлĕ Чутай районĕ. Ку район январь уйăхĕнче пĕрремĕш кварталта налогсем пухмалли плана 11,8 процент, страховани укçи пухмаллине—24,3 процент, заем укçи пухмалли задание—2,8 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех ку ĕç Шăмăршăпа Канаш районĕсенче чăтма çук япăх тăрать.

Финанс планне тултарас енĕпе чылай районсенче ĕç начар тăни акă мĕнрен килет: Советсен вырăнти органĕсем финанс ĕçне лайăхлатасси çинчен решенисем нумай йышăнаççĕ, анчах вĕсене пурнăçлас ĕçе организацилемеççĕ. Çак ĕçе совет общественноçне, уйрăмах ялти актива сахал хутшăнтараççĕ, укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра парса татнин пĕлтерĕшĕ çинчен халăх хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Тепĕр çитменлĕх вăл—финанс работникĕсем хăйсен государство умĕнчи ответлăхне çителĕклĕ туйманни пулать. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕç япăх пынăшăн айăппе ял Совечĕсем çине йăвантарма пăхаççĕ, ял тата поселок Совечĕсене куллен ĕçре сахал пулăшаççĕ.

Вырăнти Советсен сессийĕсенче тата исполкомсен ларăвĕсенче хăшпĕр чухне финанс ĕçĕ çинчен ячĕшĕн çеç сӳтсе яваççĕ.

Çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме чи малтан самокритикăпа аялтан килекен критикăна анлă сарни кирлĕ. Критикăпа самокритика вырăнти Советсенче ĕçлекенсем, финанс работникĕсем хушшинче, çавăнпа пĕрлех укçа-тенкĕ тӳлеме тивĕçлĕ çынсем хушшинче государство дисциплинине çирĕплетме пулăшни çинчен манма юрамасть. Партипе совет органĕсен решенийĕсем çине формально пăхас йăлана, ответсăрлăха, йĕркесĕрлĕхе тĕппипех пĕтерес пулать. Государство интересĕсене çирĕп тытса пырасси, решенисене пурнăçа кĕртессишĕн активлă кĕрешесси—кашни совет работникĕн чи пирвайхи тивĕçĕ. Решенисем пурнăçа кĕнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

Финанс планне ăнăçлă тултарасси вырăнти Советсемпе финанс органĕсенче ĕçлекенсен социализмлă ăмăртăвне, малта пыракансен паха опытне анлăн сарнинчен килет. Тăвай районĕнчи ял Совет председателĕсемпе финанс работникĕсен нумай пулмасть пулса иртнĕ канашлăвĕ укçа-тенкĕ мобилизацилемелли плана лайăх тултарса пырассишĕн социализмлă ăмăртса ĕçлеме обязательствăсем йышăнчĕ, хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме Вăрмар районĕнчи ял Совечĕсемпе финанс работникĕсене чĕнчĕ. Первомайски районĕнчи «Путь коммунизма» колхоз членĕсем вырăнти Советсен суйлав кунĕ тĕлне кăçалхи ялхуçалăх налогĕн малтанлăха палăртнă, çак кварталта тӳлеме тивĕçлĕ хисепĕн 80 процентне тӳлесе татма пулчĕç. Вĕсен пуçарăвне анлă сарни финанс ĕçне лайăхлатма нумай пулăшĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе хавхаланнă ĕçсыннисем вырăнти Советсен суйлавне пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илеççĕ. Çак çĕкленĕве ӳстерсе пыни умра тăракан задачăсене, çав шутра укçа-тенкĕ мобилизацилемелли плана та вăхăтра тата кирлĕ пек пурнăçласа пыма, хуçалăхпа культура строительстви валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăма май парĕ.

КОЛХОЗСЕНЕ ЭЛЕКТРИФИКАЦИЛЕНИ

ПЯТИГОРСК, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Подкумка юханшывĕ çинче, Эссентуки çывăхĕнче, темиçе колхоз пĕрлешсе гидроэлектростанци тăваççĕ. Ку электростанци сăртсем çинчен юхса анакан Подкумка çинче тăвакан 8-мĕш электростанци пулать.

«Гидросельэлектро» Пятигорскри уйрăмĕн главнăй инженерĕ Бацеинин юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каласа панă:

— Сталинла пилĕкçуллăхсенче Ставрополь крайĕнчи юханшывсем çинче 39 электростанци туса лартнă. Вĕсем крайри 100 ытла колхозсене, совхозсене тата МТС-сене электричество вăйĕ парса тăраççĕ. Электричество вăйĕпе усă курса ĕне сăваççĕ, выльăхсене çитермелли апатсене вĕтетсе хатĕрлеççĕ, сурăхсен çăмне касаççĕ тата ытти ĕçсем тăваççĕ.

Халĕ Новотроицки, Орловски тата Суворовски гидроэлектростанцисене туса пĕтереççĕ, вĕсем кăçал 30 колхоза электричество вăйĕ парса тăма тытăнаççĕ. Çывăх вăхăтрах Александрийски Обильненски тата Архангельски районĕсенче темиçе колхоз пĕрлешсе икĕ гидроэлектростанци тума тытăнаççĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Хĕрĕх пин рационализатор

Профессиллĕ союзсен Мускав хула советĕнче столицăри промышленность предприятийĕсенчи рационализаторсемпе изобретательсен ĕçĕн итогне тунă. Станоксем тăвакан, автомобильсемпе тракторсем тăвакан, çăмăл промышленность, промышленноçăн тата ытти отраслĕсен завочĕсемпе фабрикисенче рационализаторсем 40 пин çын ытла шутланаççĕ. Вĕсем юлашки вăхăтра ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, укçа-тенкĕпе материалсем перекетлемелли пиншер сĕнӳ панă. Иртнĕ çулта новаторсем государствăна çĕршер миллион тенкĕ укça перекетлесе хăварма пулăшнă.

Предприятисенче рационализаторсен комплекслă бригадисене тăвасси сарăлса пырать. Пĕрремĕш комплекслă бригадăна çирĕп сплавсем шăратса хатĕрлекен комбинатра организациленĕ. Ăна Сталинла премии лауреачĕ В. С. Кузнецов ертсе пырать. Новаторсем, рационализаторла сĕнӳсене ĕçе кĕртсе, кăçалхи çул миллион тенкĕрен кая мар перекетлесе хăварма пулнă. «Станколит» заводри рационализаторсен комплекслă бригади, Сталинла премии лауреачĕ В. Ф. Сосипаторов ертсе пынипе, хаклă сĕнӳ панă. Бригада сĕнĕвĕ пин тонна ытла металл перекетлесе хăварма май парать.

Столицăри клубсенче, культура дворецĕсемпе культура çурчĕсенче рационализаторсем валли наукăпа техника çинчен лекцисемпе докладсем вуласа параççĕ, малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентессине организацилеççĕ. (ТАСС).

Яуза юханшывне тарăнлатаççĕ

Яуза пĕчĕк те ăшăх юханшыв. Вăл Москва-рекана юхса кĕрет. Халĕ Яуза юханшывне тарăнлатаççĕ. Вăл хула варринчи шыв çулĕ пулса тăрать. Яуза Москва-рекана юхса кĕнĕ вырăнтан пуçласа Мускавпа Рязань чугун çулĕн кĕперĕ патне çитиччен, 7 километр тăршшĕ вырăнта, çĕр чавмалли машинăсем ĕçлеççĕ, вĕсем Яуза çырмине тарăнлатаççĕ. Яуза юханшывĕн икĕ хĕррипе асфальт сарса çул тăваççĕ, хитре чугун решеткесем лартаççĕ, юхан шыв урлă каçма лайăх кĕперсем хываççĕ.

Тарăнлатнă хыççăн Яузăри шыв таса пулать. Химкăри водохранилищĕрен кунта таса шыв пырса тăмалла тăваççĕ.

Яуза тăрăх Мускаври стройкăсемпе предприятисем валли тĕрлĕрен грузсем турттармалла пулать.

(ТАСС).

Челябинскри трубасем тăвакан заводăн 3-мĕш мартен кăмакинче хурçă шăратакансен коллективĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн ăнăçлă кĕрешет. Хурçă шăратакансем кашни кунах планран ирттерсе хурçă шăратаççĕ. Ф. Н. Абрамов бригади пысăк çитĕнӳ тунă. Питĕ лайăх ĕçленĕшĕн Ф. Н. Абрамова «Совет Союзĕнчи чи лайăх сталевар» ятне панă.

Ф. Н. Абрамов—ĕçсынни депутачĕсен область Советне депутата суйламалли кандидат.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ф. Н. Абрамов сталевар мартен кăмакинче хурçă мĕнле шăраннине сăнать.

В. ГЕОРГИЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

И. В. Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕ çинчен калаçусем ирттереççĕ

Мускаври Сталински районти предприятисемпе учрежденисенче тата агитпунктсенче И. В. Сталин юлташ 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухăвĕнче каланă историллĕ сăмах çинчен калаçусем ирттереççĕ. Агитаторсем пирĕн çĕршывра Сталин юлташ кăтартса панисем пурнăçланса пыни, çĕршывăн халăх хуçалăхĕ хăватлăн вăйланса пыни çинчен каласа параççĕ. Вĕсем И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ çинчен ăнлантараççĕ.

«Красная заря» фабрикăн пĕр цехĕнче кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче Евдокия Нечаева мастер работницăсемпе калаçу ирттернĕ. Вăл 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче суйлавçăсен пухăвĕнче пулнă. Нечаева юлташ суйлавçăсем Сталин юлташпа тĕл пулни çинчен каласа панă.

Автомобильсемпе тракторсем валли электрооборудовани тăвакан заводри агитаторсем аслă çулпуç сăмахĕн текстне вуласа панă, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн тата ытларах çине тăрса кĕрешме чĕннĕ.

«Освобожденный труд» ятлă фабрикăра калаçусем пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Мастер Зарапин юлташ ирттернĕ калаçăва ткачсемпе ткачихăсем интересленсе итленĕ. И. В. Сталин юлташ суйлавçăсен пухăвĕнче каланă сăмах содержанине аса илтернĕ хыççăн, Зарапин юлташ пиравăр тĕртекенсем производство планĕсене тултарассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă. Фабрика коллективĕ 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура хисеплĕ вырăн йышăннă.

Столицăри Красногвардейски, Советски, Фрунзенски, Щербаковски тата ытти районсенчи предприятисенче те И. В. Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕ çинчен калаçусем ирттернĕ.

(ТАСС).

Калчасене апат параççĕ тата сӳрелеççĕ

СТАЛИНАБАД. Таджикистанра хĕвеллĕ ăшă кунсем тăраççĕ. Кĕртыррисен калчисем хăвăрт ӳсеççĕ. Кунти колхозсем иртнĕ çулхинчен 20 кун малтан кĕртыррисен калчисене апат пама тата сӳрелеме тытăннă. Вахш тата Гиссар айлăмĕсенчи Рохатин, Октябрьски, Сталинабад тата ытти районсенче пин гектар ытла çĕр çинчи калчана апат панă тата сӳреленĕ.

ХАЛДАН (Азербайджан ССР-ĕ). Тугур-Сараджин çеçенхирĕнче республикăри пысăк совхозăн—Орджоникидзе ячĕпе тăракан совхозăн тĕштырă акнă уйĕсем сарăлса выртаççĕ. Кунта хĕвеллĕ ăшă кунсем тăраççĕ. Совхоз работникĕсен коллективĕ калчасене пахса ӳстерес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тăвать. Самолетсемпе усă курса, виçĕ пин ытла гектар çинчи калчана апат панă. Кĕртыррисен калчисене çуррине ытла самолетсем çинчен апат параççĕ. Иртнĕ çулхи пекех, çум куракĕсене химиллĕ майпа пĕтерме те самолетсемпе усă курма палăртнă.

Февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС).

Дон тăрăхĕнчи рис

КРАСНОДАР, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рис ӳстерес тĕлĕшпе сăнавсем тăвакан Пĕтĕм Союзри станцин научнăй сотрудникĕсем пулăшнипе 1952 çулта Ростов облаçĕнче рис акса ӳстерме пуçланă. Веселовски районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозра 26 гектар рис акнă. Тăварлă тăпра çине «Дубровский—129» сорт рис акнă. 19 гектар çинче кашни гектартан 57-шер центнер рис тухнă. 1,5 гектар çĕре удобренисемпе çемçетнĕ пулнă, унта кашни гектартан 76-шер центнер рис тухнă. Çак опыт тăварлă çĕр çинче те рис ӳстерме май пуррине кăтартса панă.

Хĕлле икел лартни

МОЗЫРЬ, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Полесьери вăрмансенче, пысăк уçланкăсенче, хĕллехи вăхăтра йывăç икелĕ лартакан çынсен ушкăнĕсене курма пулать. Шăннă çĕре ватса, юманпа хыр икелĕсене лартса хăвараççĕ. Наровлянык тата Житковичи вăрман хуçалăхĕсенче ĕçлекенсем икĕ уйăх хушшинче вуншар гектар çĕр çине икел лартса хăварнă.

Юманпа хыр икелĕсене хĕллехи вăхăтра лартса хăварни — çĕнĕ ĕç. Çак ĕçе Полесьере чи малтан 1949 çулта тунă. Пур участоксенче те юманпа хыр лайăх шăтса ӳснĕ.

Суйлавçăсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатар!

Çамрăк суйлавçăсен пухăвĕсем

СОВЕТСКИ. Этменти суйлав участокĕ çумĕнчи агитколлектив суйлавçăсем хушшинчи ĕçе лайăх йĕркелерĕ. Агитаторсем суйлавçăсен килĕсене тăтăшах çӳреççĕ, колхозниксем хушшинче тĕрлĕ темăсемпе калаçусем ирттереççĕ.

Агитпунктра кашни эрнере пĕрер хут çамрăк суйлавçăсен пухăвĕсем пулаççĕ. Агитаторсем вĕсене совет суйлав системи çинчен, Сталинла Конституци çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем çинчен каласа параççĕ, сасăламалли йĕркепе тĕплĕн паллаштараççĕ.

— Эпĕ кăçал 18 çул тултартăм,—тет çамрăк суйлавçă А. Николаев юлташ.—Сталинла Конституци панă аслă правăпа усă курса, суйлава кăçал малтанхи хут хутшăнатăп. Хамăн сасса эпĕ коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн паратăп.

Çамрăк суйлавçăсем хăйсем те суйлава хатĕрленес ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ—драмкружок членĕсем. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа драма кружокĕ чылай пьесăсем лартса пачĕ.

А. ЛУКИН.

Агиткультбригада ĕçре

ПЕРВОМАЙСКИ. ВЛКСМ райкомĕпе районти культура çурчĕ организациленĕ агиткультбригада Канашел, Турхан, Сĕньял, Анат Тăрмăш тата Шăхач ял Совечĕсенчи суйлавçăсем валли концертсем пачĕ. Концерт программине совет композиторĕсем çырнă çĕнĕ юрăсене ытларах кĕртнĕ.

Агиткультбригада çавăн пекех суйлавçăсем валли лекцисемпе калаçусем ирттерет, агитпунктсен ĕçне лайăх йĕркелеме пулăшать. Агиткультбригада руководителĕ А. Ягупов юлташ суйлавçăсем валли «Совет суйлав системи—тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи» темăпа лекци вуласа парать.

А ТУКМАКОВ.

ЯЛТИ АГИТКОЛЛЕКТИВРА

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Берия ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци суйлав умĕнхи агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатса пырать. Кунта 28 çынтан агитколлектив организациленĕ, кашни агитатора вунăшар кил çирĕплетсе панă. Агитпункт заведующийĕ П. Ершов тата пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Захаров юлташсем агитаторсемпе час-часах семинарсем ирттереççĕ. Юлашки семинарта агитаторсем район Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Клавдия Федотовна Ястребова юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен суйлавçăсемпе калаçу ирттересси çинчен, ял Советне депутата суйлама тăратнă 13 кандидат çинчен ăнлантарса парас ĕçе мĕнле майпа туса пырасси çинчен каласса татăлчĕç.

Агитаторсем суйлавçăсем патĕнче тăтăшах пулаççĕ, вĕсене суйлав Положенийĕ çинчен ăнлантарса параççĕ, суйлав хăçан пуласси, камсемшĕн сасăласси çинчен куллен пĕлтерсе тăраççĕ.

Суйлав умĕнхи кунсенче агитпункт хăйĕн ĕçне йĕркеллĕ туса пырать. Агитпункта тултан та, шалтан та плакатсемпе тата лозунгсемпе илемлетнĕ. Агитпунктра справка сĕтелĕ организациленĕ. Суйлавçăсем агитпунктра хаçатсемпе журналсем вулаççĕ, «Партин XIX-мĕш съезчĕ» альбомпа, «Çĕнĕ пилĕкçуллăхра ялхуçалăх продукчĕсем мĕн чухлĕ ӳсмелле» витринăпа паллашаççĕ, ăнланман ыйтусене дежурнăй-агитатортан ыйтса пĕлеççĕ, облигацисене выляв таблицисем тăрăх тĕрĕслеççĕ.

Агитпункта кашни каçах суйлавçăсем йышлăн пухăнаççĕ. Агитатор пулса ĕçлекен И. Козов коммунист кунта час-часах калаçусем ирттерет. Пĕррехинче вăл ĕлĕкхипе хальхи суйлавсем çинчен каласа пачĕ.

— Патша саманинче чухăн хресченсем суйлава хутшăнасси çинчен шутлама та пултарайман. Ун чухне ял старостисем пулма пуянсене е вĕсене майлă ĕçлекенсене суйланă. Халĕ суйлава 18 çул тултарнă граждансем пурте хутшăнма пултараççĕ. Нумаях пулмасть ял Советне депутатсем суйлама пухура кандидатсем тăратрăмăр. Вĕсен шутĕнче сурăх фермипе 1946 çултанпа ĕçлекен Татьяна Шлынцова, колхозра тăрăшса ĕçлекен Зоя Инжебейкина, Мария Михопаркина, Мария Муськина юлташсем пур. Халĕ хĕрарăмсем Советсене ертсе пырас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра хĕрарăм тĕпел кукринчен те тухайман,—тет Иван Николаевич.—Февралĕн 22-мĕшĕнче пур суйлавçăсем те коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн пĕр кăмăллă пулса сасăлĕç.

В. ЧОБАЙКИН.

Учитель-агитаторсем

ЭЛĔК. Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ вăхăтра Элĕкри И. Яковлев ячĕпе тăракан вăтам шкулти учительсем агитациллĕ-массăллă ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Агитколлективра пĕтĕмпе 28 агитатор. Вĕсем агитколлективăн çирĕп планĕ тăрăх ĕçлеççĕ.

Агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче тăтăшах пулаççĕ, суйлавçăсене суйлав положенийĕпе Сталинла Конституци çинчен каласа параççĕ, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене ăнлантарса пама калаçусем ирттереççĕ. А. Трофимов учитель Асамат ялĕнчи суйлавçăсем валли И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ çинчен доклад туса пачĕ.

Çавăн пекех П. Дубиков, М. Павлов, П. Петрикова учитель-агитаторсем те политикăллă-массăллă ĕçре хăйсен хастарлăхне кăтартаççĕ.

А. ОРЛОВ.

Клубсемпе вулав çурчĕсенче

Муркаш районĕнчи клубсемпе вулав çурчĕсем, ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май, суйлавçăсем хушшинче тĕрлĕрен культурăллă-массăллă мероприятисем чылай ирттереççĕ.

«Красное Сормово» колхоз клубĕ çумĕнче драма кружокĕ ĕçлет. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа кружок членĕсем суйлавçăсене В. Ржановăн «Энтип» тата К. Ивановăн «Çĕнелсе пырать» пурнăç пьесисене лартса панă. Халĕ кунта С. Павловпа Н. Айзман çырнă «Савнă тусăм, хура куçăм» пьесăна лартма хатĕрлеççĕ.

Пашалукасси ялĕнчи клубра, суйлавçăсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес шутпа, ятарласа справкăсем паракан сĕтел организациленĕ. Унта суйлавçăсем тĕрлĕ ыйтусем çине кирлĕ ответсем илеççĕ, çĕнĕ хыпарсемпе паллашаççĕ. Кунсăр пуçне заем облигацийĕсене тĕрĕслеме пултараççĕ.

Тойкилтĕри вулав çурчĕ тăтăшах лекцисемпе докладсем ирттерет. Кăçал кунта партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе Сталинла Конституци çинчен пурĕ сакăр лекци ирттернĕ. Суйлавçăсем уйрăмах К. Степанов, Т. Ярдыкова тата Л. Сергеев учитель-лекторсен лекцийĕсемпе докладчĕсене юратса итлеççĕ.

Çатракассинчи вулав çурчĕ пĕрле пухăнса радио итлессине йĕркеленĕ. Кунта кашни каçах Мускавран тата Шупашкартан паракан передачăсене итлеме суйлавçăсем йышлăн пухăнаççĕ.

Йӳçкасси ялĕнчи библиотекăра вулакансен йышĕ ӳссех пырать. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа çĕнĕрен 37 вулавçă хутшăннă. Библиотека суйлавçăсене çĕнĕ произведенисемпе ытларах паллаштарас шутпа кĕнекесен выставки усăнă тата куçса çӳрекен библиотекăсем организациленĕ.

П. ПАВЛОВ.

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Антонина Трофимовна СОРОКИНА, — Шупашкарти çыхăну кантурĕн аслă агенчĕ, 64-мĕш округ тăрăх Еççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат.

МУХТАВА ТИВĔÇЛĔ ЖЕЛЕЗНОДОРОЖНИК

Канаш станцинче ĕçлекен железнодорожниксем Степан Иванович Корытин ятне час-часах ăшă кăмăлпа асăнаççĕ.

Степан Иванович—пирĕн Тăван çĕршывăн хĕрӳллĕ патриочĕсенчен пĕри. Ăна, миллионшар совет çыннисем пекех, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви вĕрентсе ӳстернĕ.

С. И. Корытин юлташ 1921 çулта чугун çулăн Илеть станцине ĕçлеме кĕнĕ. Унтанпа вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне чугун çул транспорчĕпе çыхăнтарнă. Малтанхи вăхăтра вăл ремонтри рабочи пулнă. Каярахпа чугун çул кĕперĕсене юсанă е çĕнĕрен тунă çĕрте ĕçленĕ. Çав вăхăтра вăл ĕçе пĕрмаях вĕренсе, ĕçри опытне ырми-канми ӳстерсе пынă 1928 çулта ăна Илеть станцийĕнче стрелочник пулса ĕçлеме куçараççĕ. Хăйĕн ĕçне вăл кунта та яланхи пекех чунтан-чĕререн юратса тата тăрăшса туса пынă.

1941 çултанпа Корытин юлташ Канаш станцийĕнче ĕçлет. 1949 çулта ăна станци начальникĕн аслă помощникĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Чугун çул çинче нумай çул хушши тăрăшса тата хастарлă ĕçленĕшĕн Совет правительстви Корытин юлташа Ленин орденĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, «1941—1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн» медаль парса наградăланă.

Нумаях пулмасть Канаш станцинчи рабочисемпе служащисен тата инженерсемпе техниксен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕ 32-мĕш суйлав округĕ тăрăх ĕççынни депутачĕсен Канаш хула Советне депутата, суйлама Степан Иванович Корытин юлташа кандидата тăратрĕ.

Канаш хулинчи 32-мĕш суйлав округĕнчи ĕççыннисем февралĕн 22-мĕшĕнче, пурте пĕр кăмăллă пулса, Степан Иванович Корытин юлташăн сасăлĕç, совет çыннисен моралĕ политикăллă пĕрлĕхĕ çирĕп пулнине кăтартса парĕç.

Г. ИСАЕВ.
С. АСЛАН.

Пултаруллă руководитель

ЕЛЧĔК. Пĕрлешсе пысăкланнă Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, Аслă Елчĕкри суйлав округĕ тăрăх район Советне депутата суйлама Ленин ячĕпе тăракан колхоз председательне Гурий Иванович Тябуков юлташа кандидата тăратрĕç. Округри суйлав комиссийĕ Г. И. Тябуков юлташ кандидатурине регистрацилерĕ.

Г. И. Тябуков юлташ 1906 çулта, Аслă Елчĕк ялĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Коллективизаци пуçлансанах вăл ялта чи малтан колхоза кĕрет, 1934 çулччен колхозра рядовой колхозник пулса ĕçлет. 1934 çулта ăна колхоз бригадирĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă. Ку ĕçре вăл 1937 çулччен ĕçленĕ. Вăл хăйĕн бригадипе пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. 1937 çулта ăна колхоз председателĕн заместительне суйлаççĕ. Тябуков юлташ çак ĕçре хăй пултаруллă руководитель пулнине кăтартса парать. Каярахпа, 1938—1939 çулсенче, колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Вăл 1939 çулта Ленин—Сталин партийĕн ретне кĕрет. Парти хушнă ĕçсене чыслăн пурнăçласа пырать.

1939—1942 çулсенче Г. И. Тябуков юлташ — Аслă Елчĕк ял Совет председателĕ. 1942 çулта ăна Совет Çарне илеççĕ. Вăл фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçать. Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăр кĕрешнĕшĕн ăна Правительство Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата 5 медаль парса наградăланă.

Совет Çарĕнчен таврăннă хыççăн Тябуков юлташа Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем каллех колхоз председателĕ пулма суйлаççĕ. Унтанпа вăл пĕр улшăнмасăр колхоз председателĕнче ĕçлет. Вăл колхоз производствине ăста ертсе пырать. Колхоз организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çултан-çул тĕреклентсе пырать. Артель кашни çулах пысăк тухăçлă тырпул пухса кĕртет, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлать, колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх тырă чылай илеççĕ. Колхоз иртнĕ çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана срокчен тултарчĕ. Уншăн СССР Ялхуçалăх министерстви колхоза грузсем турттармалли «ГАЗ-51» автомашина парса премилерĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕрлех, унăн тухăçлăхне те ӳстерсе пырать. Иртнĕ çулшăн кăна мар, 1953 çулшăн та государствăна аш-какай парса татнă, аванс шучĕпе темиçе пин çăмарта панă.

74-мĕш Елчĕк суйлав округĕнчи суйлавçăсем 1951 çулта Гурий Иванович Тябуков юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатнĕ суйларĕç. Вăл суйлавçăсен шанăçне чыслăн тӳрре кăларса пырать.

Г. И. Тябуков—ĕççынни депутачĕсен район Совечĕн иртнĕ созыври депутачĕ тата КПСС райкомĕн членĕ, пултаруллă колхоз руководителĕ. Вăл район Советне депутата суйланма тивĕçлĕ кандидат. 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче, пурте хамăр сассăмăрсене Г. И. Тябуков юлташ кандидатуришĕн паратпăр, теççĕ округри суйлавçăсем.

В. НАУМОВ.

Ĕçре малта пыракан комсомолка

1949 çулта Шупашкар районĕнчи Иккассине предприятисенче ĕçлеме рабочисем пухакан уполномоченнăй пынă. Çавăн чухне Иккасси хĕрачи Людмила Алексеева Атăл леш енчи торфопредприятие ĕçлеме кайма çырăннă.

Торф кăларма пынă кунсенче Алексеева юлташа машинăпа ĕçлеме вĕренме йывăр пек туйăннă. Анчах вăл йывăрлăхран хăраса ӳкмен, техникăна вĕренес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленĕ, техминимум кружокĕнче вĕреннĕ. Çапла вăл торф кăларнă çĕрте тухăçлă ĕçлеме вĕренсе пынă. Вăл тăрăшса ĕçленине, хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерсе пынине кура, ăна багерно-элеваторнăй машинăпа ĕçлекенсен бригадирĕ пулма уйăрса лартнă. Унăн бригади торф кăлармалли заданисене час-часах ирттерсе тултарать, социализмлă ăмăртура малти вырăна тухать. Алексеева юлташăн бригадине лайăх ĕçленĕшĕн укçа парса премиленĕ, ăна хăйне Хисеп грамотисем парса наградăланă.

1951 çулта Алексеева юлташа РСФСР Вырăнти топливо промышленность министерстви активĕн канашлăвне чĕннĕ. Унтан таврăннă хыççăн, вăл хăйĕн юлташĕсене торф кăларас ĕçе ытларах механизацилени ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерме май пани çинчен тĕплĕн каласа кăтартать, техникăна пикенсе вĕренме чĕнет. Унăн бригади тата лайăхрах ĕçлеме тытăнать.

Алексеева юлташ малта пыракансен ĕç меслечĕсене вĕренет. Торфопредприятире нумайранпа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ А. Лукина юлташ ертсе пыракан бригада лайăх ĕçленипе палăрса тăрать. Ку бригадăн ĕç меслетне вĕренсе, Алексеева юлташăн бригади ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕ. Багерно-элеваторнăй машинăна пĕр вырăнта ĕçленĕ çĕртен тепĕр вырăна норма тăрăх 20 минут хушшинче куçармалла пулсан, Алексеева юлташăн бригади ăна 10—15 минут хушшинче куçарать.

Халĕ, хĕллехи вăхăтра, Алексеева юлташ торфа вагонсем çине тиекенсен бригадирĕ пулса ĕçлет. Çак ĕçе тытăнсан тепĕр куннех, ĕçе тухса каяс умĕн, Людмила Алексеева хăйĕн юлташĕсене таса та ăшă пӳлĕме пухнă. «Хĕрсем, пирĕн бригада мала тухма пултарать, тухмалла та», тенĕ вăл. Вăл çапла каланине унăн тусĕсем—Елизавета Осипова, Маргарита Назарова, Зоя Маркелова хапăл туса йышăннă, нормăна 130—140 процент таран тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеме пулнă. Малтанхи вунă кун хушшинчех бригада ăмăртура иккĕмĕш вырăна тухнă.

Торфопредприятире ĕçлекенсем, пурте пĕр шухăшлă пулса, Шупашкар хула Советне депутата суйлама Людмила Алексеевна Алексеева юлташа кандидата тăратрĕç. Вăл хула Совечĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ çын.

С. ХРИСТОФОРОВ.

Мария Алексеевна АЛЕКСЕЕВА, — Тир-сăран комбиначĕн раскройщици, 76-мĕш округ тăрăх Еççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат.

ПАРТИ РАБОТНИКĔ

КӲКЕÇ. «Коммунизм» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем суйлав умĕнхи пухура, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, Апашри суйлав округĕ тăрăх ĕççынни депутачĕсен район Советне депутата суйлама КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарьне Михаил Васильевич Зайцев юлташа кандидата тăратрĕç.

М. В. Зайцев юлташ 1921 çулта, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вăл Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтернĕ çĕршывра ӳссе çитĕннĕ. Педагогика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн, вăл Чăваш педагогика институтне заочно вĕренсе пĕтернĕ. 1942 çултанпа—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн членĕ.

1944—1948 çулсенче М. В. Зайцев юлташ КПСС Чурачăк райкомĕн секретарĕ, 1948 çултан пуçласа 1952 çула çитиччен КПСС Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă. 1952 çулхи августранпа КПСС Шупашкар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлет.

Районти ĕççыннисем М. В. Зайцев юлташ хăйсен шанăçне тӳрре кăларассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине пурте пĕлеççĕ. Вăл района килнĕренпех хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне район юлса пынине пĕтерес ĕçе парать. Районти колхозсем 1952 çулта государствăна тырă памалли плана срокчен тата иртерсе тултарчĕç, 1952—1953 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана январĕн 7-мĕшĕ тĕлне, республикăра чи малтан пурнăçларĕç.

Апашри пĕрремĕш суйлав округĕнчи суйлавçăсем халăхăн шанчăклă ывăлĕшĕн, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕшĕн — М. В. Зайцев юлташшăн пĕр шухăш-кăмăллă пулса сасăлĕç, хуçалăхпа культура строительствине вăйлатассишĕн, социализмлă Тăван çĕршыв хăватне ӳстерессишĕн пикенсе ĕçлеме хатĕр пулнине кăтартса парĕç.

А. ТИМОФЕЕВ.

ФЕЛЬЕТОН

Çăвар карса ларакансем

Петр Федорович Строгин ялпо правленине пĕрре пырса курсанах, кунта хăйне валли лайăх тусcем тупма май пуррине туйнă.

— Ĕçме юратакан çынсемпе яланах ĕç тухкаланăччĕ манăн,—шухăшланă вăл хăй ăшĕнче мухмăрласа ларакан ялпо председателĕ çине чиллĕн пăха-пăха илсе.

— Столовăйра тытасчĕ ăна,—шухăшланă вăл. Хăй çавăнтах ялпо правленипе хирĕçле урамри йывăç айне тухса вырт-са, кушак шăшие сыхланă пек, ялпо председателĕ Иванов столовăй еннелле утасса сăнанă. Ĕç Строгин ĕмĕтленнĕ пекех пулса тухнă. Иванов ялпо правленинчен тухса столовăй еннелле çул тытнă. Ун хыççăнах, вăрăм та çинçешке, чее пит-куçлă Строгин та пырса кĕнĕ столовăя.

— О, Николай Иванович! Миçе çул, миçе хĕл курманни. Пурнăçăрсем мĕнлерех?—кулкаласа аллине тăснă палламан çын Иванов еннелле.

— Кам пултăр вара эсир?—ыйтнă Иванов.

— Паллаймарăр-им? Çавăн пекех улшăнçă-и вара эпĕ? Манса кайнă-и пĕрле вĕреннине?—илĕртӳллĕн те тахçан курнă пекех каласнă палламан çын.

— Аса илер ĕлĕкхи кунсене. Ĕнер кăна яла таврăнтăм та тăвансем патĕнче пулкаларăм. Паян кăштах мухмăр та пур пек. Вăхăтăрсем пулсан ларсах каласар,—çăварне хупма пĕлмесĕр каласать Строгин ялпо председателĕ чăнахах те мухмăрлине туйса, хăйне тахçан курнă çын пекех туса кăтартма тăрăшса.

Часах черкке хыççăн черкке пушаннă. Пĕр-пĕрне палламан çынсем çывăх тус-сем пекех юмахланă.

— Ăçта, кам пулса ĕçлеттĕр?—ыйтнă Строгин Ивановран, юриех пĕлмĕш пулса.

— Кунта хуçаланатăп. Ялпо председателĕ вĕт.

— Апла пулсан суту-илӳ системинче ĕçлетĕр. Лайăх ĕç. Эпĕ хам та çак ĕçре чылай çулсем хушши ĕçленĕ. Çемьери сăлтавсене пула киле таврăнмалла пулчĕ. Тен мĕнле те пулсан ĕç тупса паратăр?—шăвăнтарса пынă калаçăва хăйĕн тĕллевĕсем патне Строгин.

— Памасăр. Склад заведующийĕ кирлĕ. Тен килĕштĕр?

Строгин столовăйран мĕн тухиччен мухтанă ырă çынна. Ку таранччен тӳрĕ кăмăлпа ĕçлени, малашне те çапла ĕçлесси çинчен каласнă.

Часах вăл Ядрино ялповĕн склад заведующийĕ пулса тăнă. Малтанлăха Строгин хăйне чăнахах шанчăклă çын пек тыткаланă, ĕçе юратакан çын пек кăтартма тăрăшнă. Анчах чăнните вăл мĕнле çын пулнине кунта никам та пĕлмен.

— Камĕпе мĕн тăвас. Çынни лайăх ĕçлетĕр,—тенĕ ялпо председателĕ Н. Иванов. Çак шухăшпах пурăннă ялпо правлени членĕсем те. Етĕрне райпотребсоюз председателĕ Ярузов юлташ та, Светлов ревизор та кунта сахал мар пулнă. Тепĕр чухне эрнешеррĕн те пурăннă. Вĕсем те Строгин камĕпе интересленмен, вăл камне пĕлмен.

Виçĕ уйăха яхăн ĕçлесе 6.700 тенкĕ чиксе тухса тарсан тин Строгин чăнчăн ултавçă, государство укçине çаратса сӳрекен çын иккенне пурте пĕлчĕç.

— Кам вăл, ăçта ĕçленĕскер, ăçта унăн учетнăй карточки?—пурте çак ыйтусемпе интересленеççĕ халĕ. Анчах чавса çывăх та, çыртма çук. Унăн учетнăй карточки пулман, ун çинчен никам та пĕлмест. Ăçта тарнине те пĕлекен çук.

Ялпо председателĕ пулнă Н. Ивановăн тимсĕрлĕхне пула, вăл ялпора çăвар карса ларнă вăхăтра государство укçине вăрлакансем тăтăх тупăннă. Ку тĕлĕшпе Иванов хăй те аптрасах кайман. Çичĕ уйăх ялпо председателĕнче ĕçленĕ хушăра вăл та Строгинран кая мар, 6.117 тенкĕ вăрланă. Спекулянтсене суту-илӳ тума документсем туса парса пулăшнă, ялпо ĕçне пĕтĕмпех салатса янă.

Ялпора ĕçлеме пуçличчен Н. Иванов «Большевик» колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ. Ăна колхоза районтан янă. Колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ хушăра колхоза 43 пин тенкĕ чухлĕ сăтăр тунă. Икĕ ĕне сутса укçине хăй çумне чикнĕ. Н. Иванова халĕ ĕçрен кăларнă. Вăл ответ тытма тивĕçлĕ. Анчах ăна колхоз председателĕ пулса ĕçлеме лартакан, колхозра тунă сăтăрсене пĕлсе тăнă çинчех ялпо председателĕ пулса ĕçлеме лартакан карма çăварсемпе мĕнле пулмалла?

Н. ЦВЕТКОВ.

Машинăсем юр айне пулнă

Сухайкассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри 5-мĕш бригада итемĕ çинче Канаш МТС-ĕн «МК-1100» молотилки ларать.

Çакăн пек юр айĕнче ларакан машинăсем Канаш районĕнчи ытти колхозсенче те чылай. Акă, «Мотор» колхозра МТС-ăн трактор сеялкипе лущильникĕ урам хушшинчех ăпăхса ларассĕ. «Красное пламя» колхозра лущильникпе виçĕ сӳре ял çумĕнче тарăн юр айне пулса юлнă. Юр айне пулнă машинăсем çинчен МТС механикĕсем:

— Эпир колхозсенчен расписка илнĕ, уншăн колхоз руководителĕсем айăплă,—теççĕ.

Кармаминчи Шверник ячĕпе тăракан колхозра МТС-ăн сеялки урамра, лущильник—анкартинче ларассĕ. Çавăн пекех сӳресем те (пурĕ 12 сӳре) урамра, юр айĕнче выртаççĕ. Апла пулин те, колхоз руководителĕсем вăл машинăсене сыхласа усрас тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнман. Паллах, МТС-ра ĕçлекенсен те айăп пур. Вĕсем колхозсенче хăварнă машинăсене мĕнле сыхласа усранипе интересленмеççĕ, государство пурлăхне япăхтараççĕ.

— Ун пеккисем пирĕн питĕ нумай та, ăстан пурин патне те алă çитерĕн,—тет МТС-ăн аслă механикĕ Н. Павлов юлташ.

Районти чылай колхоз руководителĕсем хăйсен колхозĕн машинисене упрасси çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Сăмахран, Вăтакас Татмăшри «Парижская Коммуна» колхозра 13 плуга кĕркуннех тимĕрçĕ лаççи патне илсе пырса лартнă. Халĕ, суракине хатĕрленнĕ май, вĕсене юсама вăхăт çитнĕ пулсан та, паян кунччен те юр айĕнчен кăларман-ха. Çавăн пекех ку колхозра двигателе те хуçасăрла пăхса усраççĕ. Колхоз председателĕ В. Микушкин юлташ ялхуçалăх машинисене лайăх сыхласа усрас, вĕсене вăхăтра юсаса хурас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Çавăн пек тĕслĕхсене районти ытти колхозсенче те курма пулать.

А. АНДРЕЕВ.
С. СТЕПАНОВ.

КОНСУЛЬТАЦИ

Сасăламалли йĕрке

Республикăри ĕççыннисем вырăнти Советсен суйлавне политикăллă тата ĕçри пысăк çĕкленӳпе хатĕрленеççĕ. 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче вĕсем, пурте пĕр çын пек пулса, суйлав урнисем патне пырса, хăйсен сассисене коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн—пирĕн халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, çулăмлă совет патриочĕсемшĕн парĕç.

Государство влаçĕн органĕсене суйламалли кун совет çыннисемшĕн пĕтĕм халăх уявĕ пулса тăрать. Суйлав кунне миллионшар ĕççыннисем ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе паллă тăваççĕ, çавăнпа вĕсем пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн чысне мухтавне тата ытларах ӳстереççĕ.

Суйлавсене пирĕн çĕршыври пек пĕтĕм халăх политикăллă пысăк активлăхпа кĕтсе илни нихăш буржуаллă государствăра та пулман тата пулма та пултараймасть. Буржуаллă çĕршывсенче государство влаçĕн органĕсем ĕççыннисене пусмăрласа çаратмалли хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра, пачах урăхла, государство влаçĕн органĕсем—ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем халăх интересĕсене хӳтĕлеççĕ тата массăсен хăйсен организацийĕсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа та государство влаçĕн органĕсене суйлассине совет çыннисем хăйсен чи çывăх ĕçĕ тесе шутлаççĕ. вĕсем суйлавсене яланах питĕ активлăн хутшăнаççĕ.

Совет суйлав системи—тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи. Суйлавсене организацилесе иртгермелли пĕтĕм йĕрке суйлавçăсене хăйсен шухăш-кăмăлне ирĕклĕн палăртма тата сасăлани вăрттăнлăхне сыхлама лайăх майсем туса парать.

Ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйламалли Положенире пирĕн суйлав системин аслă принципĕсене çирĕплетнĕ, вăл принципсем Сталинла Конституцирен тухса тăраççĕ. Суйлав Положенийĕнче çав аслă принципсене пурнăçламалли условисене те уççăн кăтартса панă.

Ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене округсем тăрăх суйлаççĕ, кашни округран тивĕçлĕ Совета пĕр депутат суйласа яраççĕ. Пирĕн республикăра ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене депутатсем суйлама пурĕ 10.036 суйлав округĕ туса хунă. Кашни суйлав округĕнче тивĕçлĕ Совета депутат суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕ тунă. Округри суйлав комиссийĕсем депутата суйлама тăратнă кандидатсене регистрацилеççĕ. Участокри суйлав комиссийĕсене бюллетеньсем хатĕрлесе параççĕ, округ тăрăх суйлав результачĕсене палăртаççĕ, депутата суйланнă кандидата ăна депутата суйлани çинчен удостоверени параççĕ.

Суйлав бюллетенĕсене йышăнма тата кандидатшăн панă сасăсене шутласа тухма республикăра 891 суйлав участокĕ туса хунă. Суйлав участокĕсене территориллĕ принцип тăрăх тунă, урăхла каласан, суйлавçăсем район, хула, ял тата поселок Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн хăйсем пурăнакан вырăнта сасăлаççĕ Суйлав участокĕсене пурне те ĕççыннисене хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçлама лайăх майсем туса парас шутпа тунă.

Кашни суйлав участокĕнче обществăллă организацисен представителĕсенчен участокри суйлав комиссийĕсем тунă. Вĕсем валли вулав сурчĕсен, шкулсен, советсен тата обществăллă учрежденисен чи лайăх çурчĕсене уйăрса панă. Участокри суйлав комиссийĕсем район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйлама кашни суйлав участокĕнче пĕрер пулаççĕ. Вырăнти Советсене суйланă чухне пĕр суйлав участокне темиçе суйлав округĕ кĕрет. Çавăнпа та сасăлас ĕçе çăмăллатма суйлавçăсен списокĕсенче кашни суйлавçă миçемĕш номерлĕ суйлав округĕнче пулнине кăтартса çыраççĕ.

Участокри суйлав комиссийĕ суйлавçăсен списокĕнчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен заявленисем йышăнса, вĕсене çав списока туса хатĕрленĕ Советăн исполкомне пăхса тухма тăратать. Суйлав умĕнхи юлашки 15 кун хушшинче çак комисси кунсеренех суйлав кунĕ çинчен тата суйлав ăçта пуласси çинчен суйлавçăсене ăнлăн пĕлтерсе тăрать. Суйлавçăсене пĕлтерсе тăма вăл вырăнти пичетпе, радиовещанипе усă курать, пĕлтерӳсемпе плакатсем çырса çапать, пухусемпе канашлусенче тата урăх майсемпе те пĕлтерет.

Суйлав кунĕ умĕн Участокри суйлав комисси председателĕ ĕççынни депутачĕсен ял, поселок, район е хула Совечĕн исполкомĕнчен суйлавçăсен тĕрĕслесе тухнă списокне илет, комисси членĕсемпе пĕрле сасăламалли пӳлĕмсем хатĕр пулнине, кашни округ тăрăх бюллетеньсем пуррипе çуккине тĕрĕслет.

Суйлав кунне, ирхине 6 сехетре, Участокри суйлав комисси председателĕ комисси членĕсем умĕнче суйлав ещĕкĕсене тата йышăннă формăпа тунă суйлавçăсен списокĕ пуррипе çуккине тĕрĕслет. Ун хыççăн вăл ещĕке хупса, комисси пичечĕпе пичетлесе хурать те суйлавçăсене сасă пама пуçлама чĕнет.

Кашни суйлавçă хăй сасăлать, сасăлама вăл сасăламалли çурта пырать. Суйлавçă сывă мар пулнă пирки суйлав çуртне хăй тĕллĕн пыма пултараймасть пулсан, ăна вара транспорт хатĕрĕсем парса пулăшаççĕ. Чирлĕ пирки сасăлама пырайман суйлавçăсем патне, вĕсем хăйсем ыйтнă тăрăх, суйлав бюллетенĕсене йышăнма вĕсен хваттерне пĕчĕк ещĕк парса Участокри суйлав комисси членне яраççĕ.

Суйлав çуртне пынă суйлавçă Участокри суйлав комисси секретарьне е çав ĕçе тума хушнă Участокри суйлав комисси членне е паспорт, е колхоз кĕнеки, е профсоюз билечĕ, е камне ĕнентерекен урăх удостоверени кăтартать. Суйлавçăсен списокĕ тăрăх тĕрĕсленĕ тата суйлавçăсен списокĕнче паллă тунă хыççăн, суйлавçă йышăннă формăллă суйлав бюллетенĕсем илет.

Вырăнти Советсен çитес суйлавĕнче пирĕн республикăри ялсенчи кашни суйлавçă икĕ бюллетень илет: пĕри—кăвак тĕсли—ĕççынни депутачĕсен район Советне суйлама; тепри—шурă тĕсли — ĕççынни депутачĕсен хула, ял тата поселок Советне суйлама.

Республикăна тӳрех пăхăнса тăракан хуласенче—Улатăрта, Канашра тата Шупашкарта пурăнакан суйлавçăсем тивĕçлĕ хула Советне суйлама пĕрер бюллетень илеççĕ.

Шупашкар хула Советне пăхăнса тăракан Сосновка тата Чапаевски поселоксенче пурăнакан суйлавçăсем икшер бюллетень илеççĕ: пĕри—шурă тĕсли — ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйлама; тепри—кăвак тĕсли— ĕççынни депутачĕсен поселок Советне суйлама.

Суйлав бюллетенĕсене çырса тултарма уйăрнă пӳлĕмре суйлавçă хăй кампăн сасăлать, çав кандидат хушаматне суйлав бюллетенĕнче хăварать, ыттисене хуратса хурать. Бюллетеньре пĕр кандидат хушаматне кăна çырнă тата суйлавçă уншăн сасăлама кăмăл тăвать пулсан, вăл бюллетеньре нимĕн те хуратмасть.

Суйлав бюллетенĕсене çырса тултарнă хыççăн, суйлавçă суйлав ещĕкĕ патне пырать те, суйлав бюллетенĕсене суйлав ещĕкне ярать.

Пирĕн суйлав законĕ сасăлании вăрттăнлăхне хытă сыхлать. Чăваш АССРĕнчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйламалли Положенин 77-мĕш статьи тăрăх, суйлавçăсем суйлав бюллетенĕсене çырса тултарнă вăхăтра сасăламалли пӳлĕмре е кабинăра сасăлакансемсĕр пуçне урăх никам та, çав шутрах суйлав комисси членĕсен те пулма юрамасть.

Хут пĕлмен пирки е чăлах (суккăр, алăсăр) пирки суйлав бюллетенĕсене хăйсем çырса тултарма пултарайман суйлавçăсем суйлав бюллетенĕсене çырса тултармалли пӳлĕме кирек хăш урăх суйлавçăна та суйлав бюллетенĕсене çырса тултарма чĕнсе кĕртме пултараççĕ.

Суйлав çуртĕнче сасăсем панă вăхăтра суйлав агитацине тума юрамасть. Суйлавçăсене никăм та хĕсĕрлеме пултараймасть.

Суйлав çуртне «Сасăлама право паракан удостоверенипе» пынă çынсене Участокри суйлав комиссийĕ уйрăм списока çырса пырать. Çав списока Участокри суйлав комиссийĕн председателĕпе секретарĕ алă пусаççĕ. «Сасăлама право паракан удостоверенисене» вара çав списокпа пĕрле хураççĕ.

«Сасăлама право паракан удостоверени» илнĕ суйлавçăсем кирек хăш суйлав участокĕнче те сасăлама пултараççĕ.

Суйлавçăсем сасă парасси суйлав кунĕнче вырăнти вăхăтпа ирхине 6 сехетрен пуçласа çĕрле 12 сехетчен пулса иртет. Суйлав участокĕнчи мĕнпур суйлавçăсем сасăланă пулин те, çĕрле 12 сехет çитмесĕр сасăсем парасси пĕтнĕ тесе пĕлтермеççĕ, мĕншĕн тесен суйлав участокне «Сасăлама право паракан удостоверени» илнĕ суйлавçăсем пыма пултараççĕ.

Суйлав çуртĕнчи йĕркелĕхшĕн Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ ответ тытать, вăл хушнисене унта пынă çынсен пурин те пăхăнмалла.

Суйлав кунĕнче çĕрле 12 сехетре Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ сасăсем парасси пĕтнĕ тесе пĕлтерет, вара комисси суйлав ещĕкĕсене уçма тытăнать.

Участокри суйлав комиссийĕ сасăсене шутлас ĕçе вĕсне çитиччен пĕр чарăнмасăр туса пырать. Сасăсене шутланă чухне сасăламалли çуртра обществăллă организацисен тата ĕççыннисен обществисен ятарласа уйăрнă представителĕсем, çавăн пекех тата пичет представителĕсем пулма пултараççĕ.

Пирĕн суйлавсем—чăн-чăн ирĕклĕ суйлавсем. Совет суйлав законĕ суйлавçăсен шухăш-кăмăлне ирĕклĕн палăртма пур майсене те туса парать. Çавăнпа та пирĕн çĕршывра ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен суйлавĕсене суйлавçăсем пурте тенĕ пекех хутшăнаççĕ.

Вырăнти Советсен иртнĕ суйлавне иртернĕ чухне пирĕн республикăра депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн сасăлас ĕçе суйлавçăсенчен 99,96 проценчĕ хутшăннă. Ĕççыннисем государство влаçĕн органĕсене суйлас ĕçе çапла активлă хутшăнни совет суйлав системи капитализмлă çĕршывсенчи суйлав системинчен малта тăнине уççăн кăтартса парать.

Вырăнти Советсен суйлавĕсем суйлава организацилесе иртерес тĕлĕшпе практикăллă ĕçе суйлавçăсем уйрăмах анлăн хутшăннипе палăрса тăраççĕ. Республикăра ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиссийĕсен составĕнче 43.357 çын ĕçлет. Вĕсем—обществăллă организацисем, ĕççыннисен обществисем, рабочисемпе служащисен тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем уйăрнă активлă çынсем. Çавăнпа та вĕсем çитес суйлавсене лайăх организацилесе иртерес тĕлĕшпе хăйсен умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлассине пирки нимĕн иккĕленмелли те çук.

Республикăри ĕççыннисем вырăнти Советсен суйлавне патриотла пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илеççĕ. Вĕсем суйлав кунĕнче—1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче—коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пурте пĕр кăмăллăн сасăласа, пирĕн тăван Коммунистсен партине, юратнă çулпуçăмăра тата учителĕмĕре Сталин юлташа чĕререн паракăнине çĕнĕрен уççăн кăтартса парĕç. Хăйсен сассисене халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн—коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн парса, республикăри рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци коммунизм строительствинчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне тĕреклетессишĕн сасăлĕç.

Д. МИТЬКОВ,
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председатель заместителĕ.

Сталинла саманана тивĕçлĕ музыкăшăн

В. Мурадели çырнă «Великая дружба» опера çинчен партин Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени пичетленсе тухни пилĕк çул тултарчĕ.

Центральнăй Комитетăн историллĕ постановленийĕне пурнăçласа, иртнĕ пилĕк çул хушшинче совет композиторĕсемпе музыка деятелĕсем чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç. Чăваш совет музыкинче те çак вăхăт ăнăçлă утăмсемпе палăрчĕ. Пирĕн музыка социализмла реализм çулĕпе çулсерен малалла аталанса пычĕ.

Чăваш композиторĕсем халиччен пуринчен ытла юрă жанрĕпе ĕçленĕ пулсан, халĕ вĕсем пысăк формăллă произведенисем—кантата, оратори, опера, музыкăллă комеди тата симфониллĕ произведенисем çырчĕç.

Пысăк формăллă произведенисенчен, чи малтан, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн — В. Ходяшевăн хор, солистсем тата симфониллĕ оркестр валли çырнă 4 пайлă кантатине палăртмалла (сăмахĕсем А. Эсхелĕн). Композитор ăна Чăваш АССР-ĕ 30 çул тултарнă ятпа çырнă. Кантата Чăваш республикинчи ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕн политикине çав тери хĕрӳ ĕненсе тăнине тата совет халăхне коммунизм патне шанчăклăн ертсе пыракан аслă çулпуça — Сталин юлташа чун-чĕререн юратнине уççăн çутатса парать.

Çамрăк композитор А. Васильев çырнă «Ленин» оратори те (сăмахĕсем С. Шавлин)—ăнăçлă произведени. Çак произведенинче музыка авторĕ хорпа оркестрăн пысăк туйăмсем палăртакан мелĕсемпе вырăнлă усă курать.

Нумай пулмасть Чăваш совет композиторĕсен Союзĕ хор, солистсем тата оркестр валли çырнă А. Васильевăн «Тăван çĕршыв» поэмине тата Т. Фандеевăн «Сталин çинчен хывнă кантатине» пăхса тухрĕ. Тухса калакансем — композиторсемпе нисательсем тата ытти ответлă работниксем — асăннă произведенисене ырласа йышăнчĕç.

Опера тата музыкăллă комеди çырас ĕçре Ленинградри композитор Ж. Пустыльник тата А. Орлов-Шусăм ĕçлерĕç. Ж. Пустыльник чăваш литератури классикĕн—К. В. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх опера çырса пĕтерчĕ. Ку вăл — чăвашсен пĕррремĕш опери. «Нарспи» опера чăваш юрри-кĕввисемпе таччăн çыхăнса тăрать, çавăнпа та вăл итлекенсемшĕн килĕшӳллĕ, кăмăллă. Операри арисемпе хорсем асра юлакан кĕвĕсемпе палăраççĕ. Калас пулать: вĕсене чылайăшне чăн-чăн ăсталăхпа çырнă.

1949 çулта Чăваш академи театрĕ О. Орлов-Шусăм çырнă хальхи пурнăçа кăтартакан «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» ятлă музыкăллă комедие лартса, пачĕ (либретти И. Максимов-Кошкинскин). Комедин музыкинче илемлĕ, çутă лирикăллă кĕвĕсем нумай. Анчах та çав вăхăтрах, латсăр музыкăллă эпизодсем те тĕл пулаççĕ.

Инструментсемпе каламалли музыка тата симфониллĕ произведенисем çырас тĕлĕшпе пирĕн çамрăк композиторсем паллă çитĕнӳ турĕç. Хăйĕн творчествине çултан-çул ӳстерсе пыракан А. Токарев трубапа калама «Кĕвĕ», скрипка валли «Серенада» (иккĕшне те оркестрпа пĕрле каламалла) тата симфониллĕ оркестр валли «Уяв увертюри», концерт вальсĕ, 4 пайлă сюита çырчĕ. Ф. Васильев рояльпе калама соната, хĕлĕхлĕ инструментсем валли квартет тата оркестр валли «Чăваш сюити», А. Васильев—симфониэтта çырчĕç.

Хусанти консерваторирен вĕренсе тухнă Т. Фандеев симфониллĕ произведенисем çырас ĕçре уйрăмах ăнăçлă ĕçлерĕ. Вăл çырнă увертюра тата «Çуралнă çĕршывра» ятлă симфониллĕ поэма—хальхи чăваш музыкинче паллă вырăн йышăнса тăрать.

Иртнĕ пилĕк çул хушшинче юрă жанрĕ те малалла аталанса пычĕ. Çак жанрпа ĕçлекен Ф. Лукин, Г. Лебедев, Г. Хирпӳ, В. Воробьев, А. Тогаев композиторсем паянхи пурнăçпа çыхăннă масăллă тата пĕчченюрламалли юрăсем çырчĕç. Çĕнĕ юрăсенчен чылайăшĕ, чăваш халăхĕ хушшинче анлăн сарăлса, ĕç çыннисен юратнă юррисем пулса тăчĕç.

1952 çулта чăваш музыкин культуринче паллă ĕç пулса иртрĕ: «Пире Сталин ырлăх пачĕ», «Салам, Мускав!», «Çамрăксен юрри», «Хăна юрри» тата «Телейлĕ тусăх» юрăсемшĕн СССР Министрĕсен Совечĕ чăваш композиторне — Ф. М. Лукин юлташа Сталинла премилауреачĕн хисеплĕ ятне памалла турĕ. Çакă вăл чăвашсен юрă творчестви пысăк çитĕнӳсем тунине пĕлтерет.

Паллах, чăваш совет музыкинче пысăк çитĕнӳсем пур. Анчах та эпир пысăк çитменлĕхсем пуррине те курмасăр тăма пултараймастпăр. Пирĕн композиторсен творчествине тишкерсе тухсан, эпир çакна куратпăр: хăшпĕр произведенисен идейăпа художествăллă шайĕ çаплах çителĕклĕ-мар-ха. Час-часах вăтам, шупка «сочиненисем», хăш чухне тата халтурăллă произведенисем те тĕл пулаççĕ.

Ку ĕçре, чи малтан, Чăваш совет композиторĕсен Союзĕ ответлă пулмалла. Анчах та композиторсен союзĕнче критикăпа самокритика яланах тивĕçлĕ вырăнта тăман пирки, хăшпĕр произведенисене, тĕплĕн тишкерсе тухмасăрах, ырласа йышăнаççĕ. Çапла вара, копозиторсен малашне те тимлесе ĕçлес кăмăлĕ сӳврĕлет. Вĕсем хăйсен ĕçĕ çине çăмăллăн пăхма тытăнаççĕ, тăрăшса ĕçлеми пулаççĕ.

Уйрăм композиторсем хăйсем малтан тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларчĕç, питĕ сахал çырчĕç, çырсан та сӳрĕк те кичем произведенисем анчах пачĕç. Сăмахран, чăваш халăхĕ хушшинче анлăн сарăлнă «Сталин çинчен хывнă юрă» тата «Тăван çĕршыв» авторĕсем—Г. Хирпӳпе Г. Лебедев композиторсем юлашки çулсенче пахалăх енчен асăннă юрăсене çитекен пĕр произведени те памарĕç. Çавăн пекех В. Ходяшев та хăйĕн творчествинчи активлăха чакарчĕ. «Çăлтăрлă çул» опера çырма тытăннă А. Орлов-Шусăм хăй ĕçĕнчен пачах пăрăнчĕ.

Чăваш совет композиторĕсен паянхи задачи—çулте асăннă çитменлĕхсемпе йăнăшсене тĕпренех пĕтерсе пырасси, КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленине пурнăçласа, сталинла тапхăра тивĕçлĕ музыкăллă произведенисем çырасси пулса тăрать.

Çак пысăк та ответлă ĕçе эпир пурнăçа кĕртме тивĕç тата пурнăçа кĕртетпĕрех.

Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă отчетлă докладра çапла каларĕ:

«Совет çынниn идейăпа культура шайĕ калама çук хытă ӳсрĕ, парти унăн пахалăхпа илемлĕх туйăмĕсене литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсем тăрăх аталантарса пырать».

Совет композиторĕсен çакна яланах асра тытас пулать. Коммунизм тăвакан совет халăхĕн ыйтăвĕсене хамăр ĕçре яланах пурнăçласа пырасси—пирĕншĕн чи пысăк чыс, чи пысăк телей. Çак ĕçре пире И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ хавхалантарать.

Юрий ИЛЮХИН.

Колхозсен отчетпа суйлав пухăвĕсенчен

АКТИВЛĂХ ПЫСĂК

КПСС Шăхасан райкомĕ колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленчĕ. Пухусене колхозниксен анлă массине активлăн хутшăнтарма, критикăпа самокритикăна вăйлăн сарнипе ирттерме мерăсем йышăнчĕ. Пухусене ирттерме пуçлатчен парти райкомĕ колхоз председателĕсемпе парторганизацисен секретарĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Исполкомăн ялхуçалăх пайĕ ку ыйтупа колхозсен бухгалтерĕсене пухса пĕр кунлăх семинар ирттерчĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсене хăш вăхăтра ирттерессине кашни колхозах чылай малтан пĕлтерсе хунă. Пухусем ирттерме районти партипе совет активне колхозсене янă.

Февралĕн 8-мĕшĕ тĕлне районти 27 колхозран 24-шĕнче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пухусенче колхозниксем правленисен ĕçне, хуçалăхри çитĕнӳсене палăртнипе пĕрлех, çитменлĕхсене критиклеççĕ.

Акă, Ильич ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен отчетлă пухăвĕ колхоз председателĕн М. Хрусталев юлташăн отчетлă докладне хытă тишкерчĕ, правлени ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, япăх ĕçленĕшĕн тивĕçлипе хытă ятларĕ. Ильич ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татман, тырпул туса илес тĕлĕшпе государство заданийĕсене пурнăçласа пыман, вăрман касса хатĕрлес тата турттарас тĕлĕшпе те чăтма çук кая юлса пырать. Колхоз правленийĕ тата унăн председателĕ Хрусталев юлташ иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе питĕ çителĕксĕр ĕçленĕ. Кашни ĕнерен 950 литр сĕт суса илес вырăнне, 627 литр çеç суса илнĕ, çамрăк выльăхсене япăх пăхнă. Çавна пула выльăхсем нумай вилнĕ, колхозăн обществăллă хуçалăхĕ пысăк тăкак курнă. Тĕштырă гектартан 8,5 центнер çеç пуçтарса кĕртнĕ. Çаксем йăлтах правлени массăпа тачă çыхăнса, колхозăн шалти демократине хисеплесе ĕçлеменнинчен килнĕ. Колхозниксем пухура Хрусталев юлташ малалла правлени председателĕ пулма пултарайманнине кăтартса пачĕç, ăна председательтен кăларчĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнĕ. Колхоз государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татнă. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне те хăпартса пынă. Иртнĕ çулта кашни ĕнерен 1.322-шер литр сĕт суса илнĕ. Колхоз мĕнпур тупăшран 50 процентне выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ.

Колхозниксен пухăвĕ кăçал колхоз тупăшне 1 миллиона çитерме май пуррине кăтартса хăварчĕ. Колхоз хуçалăхĕ çулсеренмалалла аталанса пырасси председатель лайăх ĕçленинчен нумай килет. Колхоза 19 çул хушши пĕр улшăнмасăр Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ В. Павлов юлташ ертсе пырать. Вăл колхоз производствине лайăх пĕлет, организациллĕ ĕçсене тĕрĕс туса пырать.

«Слава» колхоз членĕсем колхоз председателĕ пулма колхозниксем хисеплекен ялхуçалăх специалистне М. Васильев зоотехника суйласа хăварчĕç.

Пухусенче колхозниксем СССР Министрĕсен Совечĕ 1948 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановление правленисем мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслеççĕ, çак постановлени колхозăн хуçалăхри ĕçĕсене йĕркелесе пырас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăннине палăртаççĕ. Чапаев ячĕпе, Суворов ячĕпе тăракан колхозсенче тĕштырă туса илмелли плана тултарманшăн колхозниксен пухăвĕсем колхоз председателĕсен пĕтĕм ĕçкунĕн 25 процентне катнă. Çавăн пекех государство заданийĕсене пурнăçласа пыман бригадирсен, колхозниксен ĕçкунĕсене те кашни колхозрах катнă.

«Герой» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе районта питĕ юлса пырать. Иртнĕ çулта государствăна 564 килограмм çăм, 9.027 литр сĕт парса татман. Колхозниксен пухăвĕ правлени выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине сиелтен пăхнине хытă сивлерĕ, выльăх-чĕрлĕх валли сирĕп сурт-йĕрсем лартма кирли çинчен кăтартса пачĕ. Пуху П. Димитриев, И. Матвеев бригадирсенчен колхозниксем лашапа пасара, хăпана сӳренисене тĕрĕс шута илсе пыманшăн тата учет ĕçне япăхтарнăшăн 100-шер тенкĕ штраф шыраса илмелле турĕ.

Пуху колхоз председателĕ Ф. Никифоров юлташ хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне колхозшăн парса ĕçленине палăртса хăварчĕ.

«Родина» колхоз—пĕчĕк колхозсенчен пĕри. Пухура колхоз членĕсем, пĕчĕк хуçалăхра ӳсе пыракан техникăпа туллин усă курма май килменнине палăртса, кӳршĕри «Герой» колхозпа пĕрлешме йышăнчĕç.

А. МАЛЬЦЕВ,
КПСС Шăхасан райкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ.

Правлени колхозниксен сĕнĕвĕсене пурнăçламан

СОВЕТСКИ. Иртнĕ кунсенче Хрущев ячĕпе тăракан колхозра отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура правлени председателĕ А. Макаров юлташ отчет туса пачĕ. Отчетран иртнĕ ялхуçалăх çулне колхоз пысăк çитменлĕхсемпе вĕçлени палăрчĕ. Çавна ревизи комиссипредседателĕн М. Разумовăн отчечĕ те лайăх кăтартса пачĕ.

Колхоз иртнĕ çуракине агротехника тĕлĕшĕнчен япăх ирттерчĕ. Тырпул тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ пулчĕ. Гектар пуçне 8 центнер ыраш илнĕ, тулă гектартан 9-шар центнер кăна тухнă, çавăн пекех ытти культурăсен тухăçлăхĕ те сахал пулнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçленĕ: лашасемпе сурăхсем кăна планпа кăтартнă чухлĕ ĕрчетнĕ. Сăвакан кашни ĕнерен 950 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, пурĕ те 652 литр кăна суса илнĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли витесем çителĕксĕр. Иртнĕ çулта фермăсем тупăш парас вырăнне 68 пин тенкĕлĕх убытка кӳнĕ.

Колхоз авăн çапса пĕтермен, çитес çуракине хатĕрленесси те çителĕксĕр пырать, вăрлăхсем хывса çитермен.

Правлени колхозри активпа таччăн çыхăнса ĕçлемен, халăх хушнă ĕçсене тӳрĕ кăмăлпа йĕркелесе пыман, ĕç дисциплинине япăхтарнă.

Иртнĕ çулти отчетпа суйлав пухăвĕнче колхозниксем панă наказсене правлени нумайăшне пурнăçламан. Ĕне, сурăх, сысна витисем туса лартман, торф кăларассине организацилемен. Çăм таптармалли машина лартма хушнă—вăл та çук.

Пуху правленин çĕнĕ составне çирĕплетрĕ, лайăхрах ĕçлеме хушса хăварчĕ.

Н. МАРТЫНОВ.

Выльăх-чĕрлĕхе начар пăхаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Кăмаша ял Советĕнчи «1-ое Мая» колхоз тырпул туса илес тĕлĕшпе те, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те палăрса тăмасть. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине кунта чунсăрла пăхаççĕ.

Колхоз çулран-çул выльăх-чĕрлĕхрен тухăç илмелли плана тултараймасть. 1952 çулта кашни сăвакан ĕнерен 1.250 литр сĕт суса илме палăртнă, анчах çуррине ытларах кăна суса илнĕ. Кашни сурăхран 3,6 килограмм вырăнне 1,53 килограмм çăм, кашни чăхран 75 çăмарта вырăнне 28 кăна илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх шутне ӳстерес ĕçре çамрăк выльăхсене кĕтсе илсе, вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерессии пысăк вырăн йышăнать. Колхоз руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх витисене хĕл çитнĕ çĕре юсаса ăшăтас тесе пĕр ĕç те туман. Витесем шăтăк-çурăк, витĕр çил вĕрет. Çийĕнчи улăм тĕллĕн-тĕллĕн çĕрсе ишĕлсе аннă.

Октябрĕн 20-мĕшĕнче ялхуçалăх специалисчĕсенчен тăракан комисси выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнă. Комисси çак çӳлте асăннă çитменлĕхсенех палăртса, пĕтĕм юсав ĕçне ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме хушса хăварнăччĕ. Ку ĕçсемпе пĕрлех, комисси хушнă тăрăх, лаç çине витсе юсамалла, хуранпа каткасем лартса вырнаçтармалла пулнă.

Комисси кăтартнă срок та тахçанах иртрĕ, кивĕ çул та вĕçленчĕ, юсав ĕçĕсем пурпĕрех вырăнтан хускалман. Вăхăтра туман ĕçе пула, халĕ колхоз руководителĕсем хăйсемех йывăрлăха кĕрсе пыраççĕ.

Енесем пăрулама тытăннă. Пăрусене сĕт-турăх тыткалакан пӳлĕмс хупаççĕ. Урăх ăшă пӳлĕм çук пирки фермăра ĕçлекенсем пурте кунта кĕрсе ăшăнаççĕ. Алăк хупăнма та пĕлмест: тăтăш сын сӳрет. Çав хушăрах унпа юнашар пĕчĕк сурт пушах тăрать. Кунта тахçан пăрусем усранă пулнă. Кăмаки те тĕрĕс-тĕкелех.

Сысна витине кĕретпĕр. Амăшĕсем çумĕнче висĕ кунхи сысна çурисем чĕтресе выртаççĕ: шăпах вĕсен çурăмĕ çине хушăкран çил вĕрет, юр кĕрет.

Эпир Толстов çине пăхса илетпĕр.

— Мăкланăччĕ, сыснисем хăйсем туртса кăлараççĕ,—айăпне сирме пăхать ферма заведующийĕ.

— Тулашĕнчен мăкласан та-и?

Толстов юлташ чĕнмест.

Ĕнесен витинче висĕ кунхи тислĕке кăларман. Утă-улăмпа çăрăнса пĕтнĕ тислĕк çаплипех хытса ларнă.

Утă-улăма мĕнле тыткаланине курсан, ку колхозăн выльăх апачĕ хĕл каçма ытлашшипех çитет, тесе шутлама пулать. Анчах апла мар. «1-ое Мая» колхозăн выльăх-чĕрлĕхе тутă хĕл каçарас пулсан, 194 центнер улăм, 1.000 центнер утă çитмест.

Сырма леш енче лаша вити вырнаçнă.

— Эпир никама та пăхман. Хамăрах юсаса ăшăтрăмăр,—тет аслă конюх Павлов юлташ.

Лаша витине пăхсан, этем алли пырса тĕкĕнни самаях палăрать. Анчах тăвăр пӳлĕмре икшер лаша хупаççĕ, вите алăкĕсене уçман пирки лашасем ăшăпа тарласа йĕпенсе тăраççĕ. Пушă пӳлĕмсем те çук мар. Юнашар висĕ пӳлĕме утă склачĕ туса хунă, çав хушăрах вите маччи пушах тăрать. Вите кантăкĕсене тĕллĕн-тĕллĕн хăмапа çапса лартнă.

— Рамăсем çук,—тет Павлов юлташ.

Шăпах çав рамăсем кантăкĕ-мĕнĕпех вите маччи çинче выртаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе колхоз руководителĕсем хакламаннине кура фермăра ĕçлеме кăмăл тăвакан та çук. Ĕçлекенсем ирĕксĕртен кăна ĕçлеççĕ, икĕ çын—пĕр доярка, тепĕр пăру пăхакан çитмест.

И. Толстов коммуниста парторганизаци ответлă ĕç—выльăх-чĕрлĕх фермине ертсе пыма шанса панă. Унччен колхоза ертсе пынăскер, вăл ку ĕçĕн пĕтĕм пĕлтерĕшне лайăх пĕлет. Анчах вăл ăна хака хумасть.

Колхоз председателĕ Н. Толстов юлташ та, ферма заведующийĕ пекех, колхоз ырлăхĕпе хăй интересĕшĕн усă курма тăрăшать. Ферма таврашĕнче пĕр кубометр вутă та çук. Çав хушăрах вĕсем хăйсен килне 20—30 лав таран юман вутти турттарса хунă. Ку вутта çунтарса вĕсем кăмрăк тăваççĕ те, ирĕке кайса сутаççĕ. Юр ӳкнĕрен вара колхоз председателĕ те, ферма заведующийĕ те 2—3-шер хут кăмрăкпа кайса килме ĕлкĕрнĕ.

Харпăрхăйшĕн тăрăшнине пула вĕсем колхозри ĕçсем çинчен манса кайнă. Çу вăхăтĕнче 100 сысна вырнаçмалăх сысна вити тума, ферма сурчĕсем тавра чус карта тытса çавăрма палăртнă. 15 платникрен йĕркеленĕ строительство бригади ĕçе те тытăннă пулнă. Ферма умне 10 юман юпа лартнă та, чус пулман пирки пĕтĕм ĕç чарăнса ларнă. Чусне ниçетре суртармалла пулнă пулсан тарамччĕ-ха. Çав вăхăтсенче ку колхоз территоринче вырнаçнă «Обод» промартелĕн хăма суракан цехĕ ним чăрмавсăрах сурса пама пултарнă. Сысна витилĕх илнĕ 130 кубометр йывăçран 15 кубометрне кăна илсе тухнă. Вите тума арман кĕлетне куçармалла пулнă. Вăл та вырăнтах ларса юлнă. Ертсе пыманнипе строительство бригади те арканса кайнă.

Халĕ сивĕ кунсем тăраççĕ. «1-ое Мая» колхоз руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх витисене çакăн пекех хăварсан, паян сывă выльăх-чĕрлĕх ыранах шăнса пăсăлма пултарать. Уйрăмах çамрăк выльăхсене усрама услови туса парас пулать.

Юнашар ялта зооветучасток вырнаçнă. Кунта унти специалистсем пулмаççĕ мар, пулаççĕ. Анчах пырса тухса кайнипех лăпланса лараççĕ. Тумалли ĕçсене вĕçне çитерме тăрăшмаççĕ. Колхозри парторганизацине КПСС райкомĕн те колхоз председателĕн, парти членĕн кандидачĕн Н. Толстов юлташăн ĕçри ответлăхне ӳстермелле.

А. ГРИГОРЬЕВА.
Е. АФАНАСЬЕВ.

Юр тытаççĕ

ЧУРАЧĂК. Шуркасси ял Советне кĕрекен колхозсем çулсеренех вăйлă тырпул туса илеççĕ. Вĕсем кăçал та вăйлă тырпулшăн кĕрешсе, хĕллехи агротехникăллă ĕçсене пурнăçласа пыраççĕ. Иртнĕ кунсенче «Большевик» колхоз 181 гектар çинче, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 148 гектар çинче, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 216 гектар çинче пĕрремĕш хут тата 43 гектар çинче иккĕмĕш хут юр тытса хăварчĕç.

Ф. СЕМЕНОВ.

Вăрманпромхозсен шалти резервисем пирки

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви вăрман промышленноçне пысăк пулăшу параççĕ, ăна чи малта тăракан техникăпа хĕçпăшаллантараççĕ. Халĕ «Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсенче, 1940 çулхипе танлаштарсан, тракторсем — висĕ хут, автомашинăсем — тăватă хут, пăравуссем—вунă хут, пĕренесене тиесе пушатмалли крансем—тăхăр хут нумайрах. Çитес сезонта трест касса хатĕрленĕ йывăçран 80 процентне механизмсемпе турттарса кăларма пултарать. Çĕмĕрле, Улатăр, Вăрнар тата Йĕпреç вăрманпромхозĕсем вара турттарса кăларас ĕçе пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех механизацилеме пултараççĕ.

Государство планне ăнăçлă тултарса пырасси хăватлă техникăна лайăх ĕçлеттернинчен, механизаторсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне ӳстерсе пынинчен килет. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ хăвăрт ӳсе пыракан халăх хуçалăх ыйтăвĕсенчен вăрман промышленноçĕ юлса пынине пĕтерме, йывăç хатĕрлес ĕçе комплекслă механизацилеме хушса хăварчĕ. Съезд решенийĕсене пурнăçлас тесен, вăрманпромхозсен пурин те плана уйăхран уйăха тултарса пымалла.

Малта пыракан механизаторсем çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Кире вăрманпромхозĕнчи паллă трактористсем Сысуйкинпа Боренин юлташсем, Алтышево вăрманпромхозĕнчи Вельдяевпа Горячев юлташсем, Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи шоферсем Барышевпа Кутузов юлташсем, Улатăр вăрманпромхозĕнчи лебедчиксем Петрпа Яков Червяковсем тата ыттисем те машинăсемпе механизмсене таттисăрпиçĕр, тухăçлă ĕçлеттереççĕ, нормăна тăтăшах ирттерсе тултараççĕ.

Трест тата вăрманпромхозсен руководителĕсен, профсоюз обкомĕ малта пыракан коллективсемпе производство новаторĕсен паха опытне пĕтĕçтерсе сарма, техникăпа лайăх усă курмалла тума тăрăшмаççĕ. 1952 çулта трест механизмсемпе усă курмалли задание пурнăçламан. 1951 çулхипе танлаштарсан, спискра тăракан механизмсемпе 30 процент сахалтарах йывăç хатĕрленĕ. Пăрачкав, Шăмăршă тата Канаш вăрманпромхозĕсем автомобильсемпе усă курмалли плана 40—60 процент çеç тултарнă. Ытти чылай вăрманпромхозсенче те механизмсене япăх ĕçлеттереççĕ.

Улатăрти сулă юхтаракан кантурта иртнĕ çуркуннерепе икĕ лебедка ахаль ларать. Вĕсене вăрманпромхозсене панă пулсан, халиччен чылай ĕç тума пулатчĕ, анчах трест çав лебедкăсемпе усă курма тăрăшмасть.

Трест иртнĕ çулхи плана вăрман касса хатĕрлес енĕпе те, турттарса кăларас тĕлĕшпе те тултарман. 1951 çулхипе танлаштарсан, 342 пин кубометр йывăç сахалтарах турттарса кăларнă. 1950 çулта машинăсемпе механизмсем, хальхипе танлаштарсан, çуррине яхăн çеç пулнă. Апла пулин те ун чухне иртнĕ çулхинчен нумайрах йывăç хатĕрленĕ.

Вăрман промышленность ĕçĕнчи тепĕр çитменлĕх вăл—перекетлĕхшĕн, государство пурлăхĕпе укçа-тенкине тирпейлĕ расходлассишĕн кĕрешменни. Чылай мастерсемпе технoруксем тата ытти работниксем продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ. Вăрманпромхозсен директорĕсемпе главнăй бухгалтерĕсем хуçалăх расчетне çирĕплетме, учетпа отчетноçа лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Трест предприяти руководителĕсен ответлăхне ӳстерме тăрăшмасть. Çавна пула трест 1952 çулта сметăран ирттерсе 17 миллион тенкĕ ытла укçа расходланă. Финанс хуçалăхĕ хавшани ĕçре пысăк йывăрлăхсем патне илсе пырать.

Кăçалхи январь уйăхĕнче те ĕçсем улшăнмарĕç. Йывăç турттарса кăлармалли оперативлă плана Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ çеç тултарнă. Трест планпа палăртнинчен 50 пин кубометр сахалтарах йывăç касса хатĕрленĕ, 80 пин кубометр сахалтарах çул хĕррине илсе тухнă, вуншар пин кубометр турттарса кăлараймая.

Республикăри вăрман промышленноçĕ юлса пынине пĕтерессии вăраха тăсăлчĕ. Анчах çакă вара трест управляющине Киркин юлташа, главнăй инженера Лапинский юлташа пĕртте хумхантармасть пулмалла. Трестра лăпкă, инженерсемпе техниксем чылайăшĕ ĕçсем япăх пынăшăн ответлăх туйни сисĕнмест. Кунта специалистсем нумай. Вĕсем чылайăшĕ хăйсен вăхăтне кантурта, тĕрлĕ сведенисем пухса ирттереççĕ. Январь уйăхĕнче производство пайĕпе техника пайĕнче ĕçлекен инженерсенчен иккĕшĕ çеç вăрманпромхозсенче пулнă.

Трест приказсемпе распоряженисем нумай çырса кăларать. Вĕсене мĕнле пурнăçланине вара кирлĕ пек тĕрĕслемест, работниксене вырăна ярса руководительсене тивĕçлĕ пулăшу памасть. Производство пайĕ трест япăх ĕçленĕшĕн техника пайне айăплама, техника пайĕ вара айăпа производство пайĕ çине йăвантарма пăхать. Чăннипе вĕсем иккĕшĕ те айăплă. Производство пайĕ предприятисене технологи процесне тĕрĕс йĕркелеме, малта пыракансен опытне сарма пулăшмасть. Техника пайĕпе материально-техникăллă кантур (директорĕ Попов юлташ) машинăсемпе механизмсене таттисăрпиçĕр ĕçлеттерме мерăсем йышăнмаççĕ. Запаслă пайсем вăхăтра, çителĕклĕ кӳрсе килменнине пула, кӳрсе килнисене тĕрĕс мар валеçнине пула предприятисенче чылай машинăсемпе механизмсем ахаль лараççĕ. Сăмахран, радиаторсемпе аккумуляторсем çитменнипе кĕркунне вуншар автомашина ĕççĕр ларнă.

Ĕç тата ĕç укçи пайĕн начальникĕ Шапошников юлташ механизаторсем çителĕклĕ вĕрентсе хатĕрлессишĕн, кадрсен ăсталăхне ӳстерсе пырассишĕн кирлĕ пек тăрăшмасть.

Вăрманпромхозсенчи хуçалăх руководителĕсем нумайăшĕ Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисенчен вывод туман, хăйсен ĕçне съезд кăтартса панă пек çĕнетсе лайăхлатма тăрăшмаççĕ. Кайсаров юлташ директор пулса ĕçлеме тытăннăранпа — Шăмăршă вăрманпромхозĕ, Федоров юлташ ĕçлеме пуçланăранпа—Пăрачкав вăрманпромхозĕ, Моисеенко юлташ ертсе пыма тытăннăранпа — Улатăр вăрманпромхозĕ плана тăтăшах тултарса пыраймаççĕ.

«Партие кая юлнă тата нимĕнпе те интересленмен, харпăр хăй канлĕхне ĕç интересĕсенчен мала хуракан чиновниксем мар, партипе правительство директивисене пурнăçа кĕртессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тата хастар кĕрешекен, государство интересĕсене нимĕнрен те мала хуракан боецсем кирлĕ»,—терĕ Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче.

Ĕçсыннисене, коммунизмла воспитани парас, вĕсен активлăхне ӳстерсе пырас, çитменлĕхсене пĕтерес ĕçе вăйлатасси самокритика тата аялтан килекен критикăна сарнинчен нумай килет. Чылай вăрманпромхозсенче тата трестра аялтан килекен критикăна кирлĕ пек хак памаççĕ. Улатăр вăрманпромхоз руководителĕсем критиклекенсене хĕсее çул çине тăнă. Çавăншăн вĕсене тивĕçлĕ организацисем ответ тыттарнă. Трест руководителĕсем сăмахпа критикăна хисеплеççĕ, пухусенче, канашлусенче çитменлĕхсене хăюллăн палăртма сĕнеççĕ. Ку—лайăх, тейĕпĕр. Анчах критикăна сарас тесен, сăмахпа йышăнни çеç çителĕксĕр, панă сĕнӳсем тăрăх çийĕнчех мерăсем йышăнас пулать. Çакна трестра час-часах пурнăçламаççĕ.

1952 çулхи ноябрь уйăхĕнче В. Камаевпа А. Семенова юлташсем Кире вăрманпромхозĕнчи йĕркесĕрлĕхсем çинчен çырса пĕлтернĕ. Трест çак çырăва Кире вăрманпромхозне ярса панă та лăпланнă. Вăрманпромхоз директорĕ Зеленков юлташ çитменлĕхсене пĕтерни çинчен треста икĕ уйăх иртсен çеç пĕлтернĕ. Трест Камаевпа Семенова юлташсене мерăсем йышăнни çинчен ответ та паман. Ĕçсыннисен жалобисем çине çакăн пек пăхсан, критикăна сарасси çинчен шухăшлама та çук.

Трестра тата вăрманпромхозсенче чылайранпа ĕçе комплекслă механизацилесси, техникăна икĕ смена ĕçлеттересси, поток меслечĕпе усă курасси çинчен калаçаççĕ. Анчах чылай çĕрте ĕçсем çавсавах кивĕлле пыраççĕ. Тракторсене, лебедкăсене тата электропăчкăсемпе электростанцисене нумайăшне пĕр смена çеç ĕçлеттереççĕ. Асăннă механизмсемпе машинăсене икĕ смена ĕçлеттерсен, кашни уйăхра вуншар пин кубометр йывăç нумайрах хатĕрлеме пулать.

Ĕçе тĕрĕс йĕркеленин уссине кăтартакан тĕслĕхсем сахал мар. Вăрнар вăрманпромхозĕнче тракторсемпе куллен вăтам шутпа 13—15-шер кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухнă. Тракторсем сӳрекен çулсене лайăх юсани, йывăçсене тĕрĕс касса йăвантарни, тракторсене чĕртсе яма шыв ăшăтса хуни механизаторсен ĕç тухăçлăхне 2—2,5 хут ӳстернĕ. Çак вăрманпромхозрах автомашинăсем пĕренесене тиесе пушатнă чухне ахаль нумай ларнă. Стахановецсем сĕннипе кашни автомашина валли запаслă çуна туса хатĕрленĕ. Пĕр çуни çул çинче пулнă чухне тепри çине тиеççĕ. Çапла туни автомашинăсене график тăрăх çӳреттерме май туса панă, шоферсен ĕç тухăçлăхне 50 процент ӳстернĕ. Çавăн пек ĕçсем кашни вăрманпромхозрах туса ирттерме пулать, ирттермелле те.

Чылай вăрманпромхозсенче машинăсемпе механизмсене вăхăтра юсамаççĕ, вĕсемпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Январь уйăхĕнче пурĕ 79 автомашина, 17 кран, 23 трактор ĕçлемен. Хăшпĕр вăрманпромхозсенче груз турттармалли автомашинăсемпе руководительсем хăйсем çӳреççĕ, тĕрлĕ, питех те кирлĕ мар япаласем турттараççĕ. Машинăсемпе механизмсене юсамалли графика нумай çĕрте пăсаççĕ. Малта пыракан механизаторсем машинăсене лайăх пăхса усрама, вĕсене тĕпрен юсамасăр нумайрах ĕçлеттерме пулаççĕ. Çак паха пуçарăва анлăн сарни кирлĕ.

Шоферсемпе механиксем Улатăрти автомашинăсем юсакан мастерской (ЦРММ) механизмсене япăх юсанишĕн пăшăрханаççĕ. Кунта тĕпрен юсанă чылай автомашинăсем хăвăрт пăсăлаççĕ, вĕсене тепĕр хут юсама тивет. Мастерской директорĕн Коноплев юлташăн технологи процесне çĕнетсе лайăхлатмалла, мастерсен ответлăхне ӳстермелле, автомашинăсене хăвăртрах тата пысăк пахалăхпа юсаса кăлармалла тумалла.

Хĕллехи вăхăтра хăйне евĕрлĕ йывăрлăхсем пулаççĕ: çулсем çине юр çуса тултарать, автомашинăсемпе тракторсене ĕçе яма кансĕр. Çавăнпа кашни вăрманпромхозра механизаторсем валли тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса пама тăрăшмалла.

Эпир вăрманпромхозсенчи хăшпĕр резервсемпе çитменлĕхсене çеç палăртрăмăр. Чăннипе вĕсем тата ытларах. Кашни вăрманпромхозăн йывăç хатĕрлевне хăвăртлатма, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме, ĕçе юрăхлă йывăç ытларах кăларма май паракан резервсем пур. Вĕсемпе туллин усă курма коллективсене мобилизацилесси, самокритикăпа аялтан килекен критикăна вăйлатса пырасси, социализмлă ăмăртăва, малта пыракансен опычĕпе меслетне анлă сарасси — вăрманпромхозсенчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен чыслă та пысăк тивĕçĕ.

И. СМИРНОВ.

Халӑхӑн политикӑллӑ консультативлӑ совечӗн Пӗтӗм Китайри комитечӗн сессийӗнче

Мао Цзе-дун тухса калани

ПЕКИН, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви ҫапла пӗлтерет:

Февралӗн 7-мӗшӗнче Халӑхӑн политикӑллӑ консультативлӑ совечӗн Пӗтӗм Китайри комитечӗн тӑваттӑмӗш сессийӗн юлашки ларӑвӗ пулнӑ.

Лару резолюци йышӑннӑ. Вӑл резолюци Чжоу Энь-лайӑн политикӑллӑ докладне пӗтӗмӗшпех ырлать.

Ларура Халӑхӑн политикӑллӑ консультативлӑ совечӗн Пӗтӗм Китайри комитечӗн председателӗн заместителӗ Чэнь Шу-Тун Халӑхӑн политикӑллӑ консультативлӑ совечӗн Пӗтӗм Китайри комитечӗн бюровӗн ӗҫӗ ҫинчен тунӑ доклада ырлакан резолюци йышӑннӑ. Сесси бюрона Халӑхӑн политикӑллӑ консультативлӑ совечӗн иккӗмӗш пӗрлехи сессине пухма хатӗрлеме хушнӑ, Халӑхӑн политикӑллӑ консультативлӑ совечӗн яланхи комитечӗн бюровӗн составне пысӑклатма йышӑннӑ, бюро составне ҫӗнӗрен 23 член кӗртнӗ.

Ларура ҫавӑн пекех халӑхсен мире хӳтӗлес тӗлӗшпе пулса иртнӗ Конгресӗн документчӗсенче ҫырнӑ требованисене пӗтӗмӗшпех ырласа резолюци йышӑннӑ.

Лару участникӗсем Китай халӑх добровольцӗсем патне саламлӑ телеграмма янӑ. Унта вӗсем ҫӗнтерӳ тӑвиччӗнех халӑх добровольцӗсен паттӑр кӗрешӗвне пулӑшса пыма пулнӑ.

Лару хупӑнас умӗн председатель Мао Цзе-дун тухса каланӑ. Мао Цзе-дун сӑмах каланӑ вӑхӑтра ларура пулнисем темиҫе хутчен тӑвӑллӑн алӑ ҫупнӑ. Мао Цзе-дун докладсене, сессире йышӑннӑ резолюцисене ырланӑ, сесси ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ вӗҫленнӗ ятпа сесси участникӗсене саламланӑ. Вӑл Китай халӑхӗ умӗнче тӑракан, вӑраха яма юраман виҫӗ задачӑна кӑтартса панӑ:

«Пӗрремӗшӗнчен, «Америка агрессине хирӗҫ тӑрассишӗн тата Корейӑна пулӑшассишӗн кӗрешӗве вӑйлатса пымалла». Ҫак кӗрешӗве вӑйлатса пырас пулать, мӗншӗн тесен Америка империализмӗ Китайпа Корейӑн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене тытса чарассишӗн ҫине тӑрать, перемири ҫинчен пыракан калаҫусене пӑсать, Корейӑри агрессиллӗ вӑрҫа сарса пыма питӗ хытӑ тӑрӑшать. Пире мир кирлӗ, анчах, Америка империализмӗ сӑлтавсӑр требованисем кӑларса тӑратма тата агрессие сарса пымалли план ҫинчен шухӑшлама пӑрахиччен, Китай халӑхӗн пӗртен-пӗр шухӑш-кӑмӑлӗ ҫакӑн пек пулать: Корея халӑхӗпе пӗрле малалла кӗрешмелле. Ку вӑл эпир вӑрҫа кӑмӑлланине пӗлтермест. Эпир пӗр тӑхтаса тӑмасӑр вӑрҫа чарса лартасшӑн, татса паман ыйтусене кайран татса парасшӑн. Анчах Америка империализмӗ ун пек тума шутламасть. Мӗнех вара, апла пулсан малалла кӗрешӗпӗр. Америка империализмӗ кирек миҫе ҫул хушши вӑрҫма шутласан та, эпир ӑна хирӗҫ кӗрешме, Америка империализмӗ каялла чакма пуҫличченех, Китайпа Корея халӑхӗсем пӗтӗмӗшле ҫӗнтерӳ тӑвиччӗнех кӗрешме хатӗр.

Иккӗмӗшӗнчен, Совет Союзӗнчен вӗренмелле. Эпир нациллӗ, питӗ пысӑк строительствӑна пуҫӑнса кӗртес тетпӗр. Эпир тумалли ӗҫ ҫӑмӑл мар, пирӗн опыт та ҫителӗксӗр. Ҫавӑнпа та пирӗн Совет Союзӗн малта пыракан опытне ҫине тӑрса вӗренмелле. Коммунистсен партийӗн членӗсем-и эпир е ҫук-и, кадрти вӑтӑ е ҫамрӑк рабочисем, инженерсемпе техниксем, интеллигенци, рабочисем е хресченсем пулсан та — ӑна-кӑна пӑхмасӑр пирӗн пӗтӗм кӑмӑлпа Совет Союзӗнчен вӗренмелле. Пирӗн Марксӑн, Энгельсӑн, Ленинпа Сталинӑн теорине кӑна мар, Совет Союзӗнчи малта пыракан наукӑпа техникӑна та вӗренмелле. Хамӑрӑн ҫӗршыва тӑвас тесен, пирӗн Совет Союзӗнчен вӗренес ӗҫе пӗтӗм халӑх ӗҫӗ туса хумалла.

Виҫҫӗмӗшӗнчен, пирӗн ертсе пыракан органсенчи тата мӗнпур ертсе пыракан работниксем хушшинчи бюрократизма хирӗҫ кӗрешмелле. Хальхи вӑхӑтра вырӑнти чылай организацисемпе кадрти кӗҫӗн работниксем хушшинче администраци ӗҫне тӗрӗс мар туса пыракансем, законсемпе дисциплинӑна пӑсакансем палӑраҫҫӗ. Кун пек йӗркесӗрлӗх пуҫланни тата ӳссе пыни ертсе пыракан органсенчи тата ертсе пыракан работниксем хушшинчи бюрократизмпа тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Центральлӑ правительство органӗсене илӗпӗр. Унта та нумай пайсенчи ертсе пыракан кадрсем хӑйсен учрежденийӗсенчен тухмасӑр решенисемпе директивӑсем хатӗрленипех ҫырлахаҫҫӗ. Вӗсем ӗҫе хатӗрлеме тата ӑна пайсенче кӑна тума тӑрӑшаҫҫӗ. Рядовой работниксем патне кайса вӗсен ӗҫӗ мӗнле пынине тӗрӗслес ӗҫ ҫине кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ. Ҫавӑн пек ертсе пынине пула, ку работниксем массӑсенчен тата чӑн-чӑн пурнӑҫран уйрӑлса каяҫҫӗ.

Ҫакна пула пирӗн ӗҫре пысӑк проблемӑсем тухса тӑраҫҫӗ. Пирӗн бюрократизма пӗтермелле, массӑсемпе ҫирӗп ҫыхӑну тытмалла. Центральлӑ тата вырӑнти правительствӑсенчи мӗнпур ертсе пыракан ҫынсен ӗҫе тӗрӗслес шутпа час-часах рядовой работниксем патӗнче пулмалла. Ертсе пыракан органсенчи тата ертсе пыракан кадрсем хушшинчи бюрократизма пӗтерсен, кӗҫӗн работниксем хушшинче пулакан киревсӗрлӗхе: административлӑ майсемпе кӑна ӗҫленине, законсемпе дисциплинӑна пӑснине пӗтерме май пулать. Эпир ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерсен, пирӗн ҫӗршывӑн план тӑрӑх пулса пыракан строительстви, паллах ӗнтӗ, ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ. Пирӗн халӑх-демократиллӗ система тата ытларах аталанӗ, империализмӑн интригисем, паллах, путланса ларӗҫ. Эпир, паллах ӗнтӗ, татӑклӑ ҫӗнтерӳ тӑвӑпӑр!».

СССР-па Финлянди тата Норвеги хушшинчи протокол ҫине алӑ пуснӑ

ХЕЛЬСИНКИ, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Февралӗн 7-мӗшӗнче Финляндин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинче Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви, Финлянди республикин правительстви тата Норвеги королевствин правительстви хушшинче «Муоткаваара» («Крокфьеллет» — норвеги чӗлхипе. — Ред). ятлӑ чикӗ паллине пӑхса тӑрасси ҫинчен Протокол ҫине алӑ пуснӑ. Ҫак чикӗ паллине Совет Союзӗн, Финляндипе Норвегин государство чиккисем пӗрлешнӗ ҫӗрте туса лартнӑ.

Совет Союзӗ енчен протокол ҫине Совет Союзӗн Финляндири посланникӗ В. З. Лебедев, Финлянди енчен — ют ҫӗршыв ӗҫӗсен иккӗмӗш министрӗ Р. Тернгерн тата Норвеги енчен — Норвегин Финляндири посланникӗ Т. Л. Сейппель алӑ пуснӑ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ февралӗн 9-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ:

Иртнӗ кун хушшинче Корея Халӑх ҫарӗн чӑсӗсем Китай халӑх добровольцӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Енер ҫӗрле Америкӑн «В-29» йышши бомбардировщикӗсем Пхеньянри Дятхаренли районӗ ҫине, унта нимӗнле ҫар объекчӗсем ҫук пулин те, тискеррӗн бомбӑсем пӑрахнӑ. Халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур, пурӑнмалли ҫуртсемпе землянкӑсене нумайӑшне ишӗлтернӗ.

Халӑх ҫарӗн зенитлӑ чӑсӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтакӗсем паян тӑшманӑн 6 самолетне персе ӳкернӗ, 7 самолетне сиенленӗ.

Гоминдановецсем Вьетнам тата Китай хулисем ҫине вӑрӑ-хурахла тапӑнма Бирма территорийӗпе усӑ кураҫҫӗ

ПАРИЖ, февралӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви гоминдановецсен ҫарӗн юлашкисем Бирма территорийӗнчен Демократиллӗ Вьетнам Республикипе Китай Халӑх Республикин чикӗри районӗсем ҫине вӑрӑ-хурахла тапӑнни ҫинчен пӗлтерет. Бирмӑри «Нейшн» хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, 600 гоминдановеца яхӑн Вьетнампа Бирма хушшинчи чикӗ урлӑ каҫса Кенг-Кок хули ҫине тапӑннӑ. Анчах Вьетнам халӑх ҫарӗсем гоминдановецсене хӑваласа кӑларнӑ, вӗсене чылай ҫухатусем кӳнӗ. Вьетнам халӑх ҫарӗсем хӑваласа кӑларнӑ гоминдановецсем Бирма территорийӗ ҫине каялла таврӑннӑ. Вӗсем Кенг-Лап хулине йышӑннӑ, хӑйсен аманнӑ ҫыннисене Монг-Пиао хулине куҫарнӑ. Аманнисене вырнаҫтарма ҫак хулари мӗнпур пысӑк ҫуртсене туртса илнӗ.

«Нейшн» хаҫат ҫапла пӗлтерет: гоминдановецсем нумаях пулмасть Китайӑн Чэли ятлӑ хули ҫине тапӑнма хӑтланнӑ, анчах вӗсене Китай Халӑх Республикин ҫарӗсем хӑваласа кӑларнӑ. Хаҫат гоминдановецсем ҫавӑн пекех Бирмӑн Таиланд хушшинчи чикӗ ҫывӑхӗнчи территорийӗнче ирсӗр ӗҫсем туни ҫинчен ҫырать.

БОЛИВИРЕ ХРЕСЧЕНСЕМ ҪӖРШӖН КӖРЕШЕҪҪӖ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн корреспонденчӗ Ла-Пасран (Боливи) пӗлтернӗ тӑрӑх, Кочабамба районӗнчи хресченсем-индеецсем пуян ҫӗр хуҫисен ҫӗрӗсене туртса илеҫҫӗ. Февралӗн 7-мӗшӗнче Кочабамбӑра индеецсен демонстрацийӗ пулнӑ. Индеецсем пин ҫын ытла хулари центральлӑ площаде тухнӑ, хресченсен юхӑмӗн руководителӗсене ирӗке кӑларма требовани лартнӑ. Хресченсен юхӑмӗн руководителӗсем индеецсене ҫӗр пама требовани лартнӑ пулнӑ, ҫавӑншӑн вӗсене арестленӗ.

Коммунистсен партийӗн органӗ «Эль Пуэбло» хаҫат ҫак событисем пирки ҫырнӑ чухне правительство тӑхлан рудникӗсене национализациленисӗр пуҫне ҫӗр реформи те иртterme пулни ҫинчен аса илтерет. Ҫӗр реформи ҫинчен закон йышӑнассине вӑраха тӑснӑшӑн критиклесе, хаҫат ҫапла ҫырать: «Пӑлханусем пулса иртнине ҫакӑнпа ӑнлантарса пама пулать: индеецсен требованийӗсене пурнӑҫа кӗртмен. Нимӗнле ҫӑмӑллӑх та ҫук. Тӗрӗссипе илсен, хресченсен чи хастарлӑ руководителӗсене хӗсӗрленӗ пирки лару-тӑру йывӑрланнӑ».

Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн Совечӗн сессийӗ вӗҫленнӗ

ПРАГА, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Прагӑра Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн Совечӗн сессийӗ хӑйӗн ӗҫне вӗҫленӗ.

Юлашки ларура Совет хӑйсене Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацине илме ыйтакан организацисен заявленийӗсене пӑхса тухнӑ. 13 ҫӗршыври ҫамрӑксемпе студентсен 17 организацине ҫӗнӗрен Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацине илме йышӑннӑ. Ҫӗнӗрен илнӗ организацисене шутласан, федерацие халӗ тӗнчери 88 ҫӗршыври ҫамрӑксемпе студентсен организацийӗсем кӗреҫҫӗ.

Совет Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн вице-президенчӗ пулма Совет Союзӗнчи ҫамрӑксенчен — А. Шелепина, Чехословакири ҫамрӑксенчен — Ладислав Лиса суйланӑ. Федераци секретарӗсем пулма Англири ҫамрӑксен представительне М. Никсона тата Иранри ҫамрӑксен представительне А. Намазине суйланӑ.

Совет сессийӗнче сӳтсе явма пӑхса тухнӑ ыйтусем тӑрӑх тӗрлӗ комиссисем хатӗрленӗ резолюцисен проекчӗсене тӑратаҫҫӗ. Советӑн мӗнпур документчӗсене пӗр саслӑ пулса йышӑнаҫҫӗ.

Совет 1953 ҫулхи июлӗн 25-мӗшӗнче ҫамрӑксен черетлӗ, Пӗтӗм тӗнчери виҫҫӗмӗш конгресне пухма решени йышӑннӑ.

Совет ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери, нациллӗ тата вырӑнти пӗрлешӗвӗсене, миршӗн тата ҫамрӑк ӑрӑвӑн пурнӑҫ интересӗсемшӗн федераципе пӗрле кӗрешме кӑмӑл тӑвакансене чӗнсе каланӑ. Совет мӗнпур ҫамрӑксемпе хӗрачасене, — вӗсем политика тата тӗн пирки мӗн шухӑшланинӗ, расӑпа наци тӗлӗшӗнчен тата социаллӑ положени мӗнле пулнине пӑхмасӑр, Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен виҫҫӗмӗш конгресне тата ҫамрӑксемпе студентсен мирпе туслӑхшӑн иртterекен Пӗтӗм тӗнчери тӑваттӑмӗш фестивальне хатӗрленсе иртteрес ӗҫе активлӑ хутшӑнма чӗннӗ.

Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн Совечӗ халӑхсен мире хӳтӗлес тӗлӗшпе пулса иртнӗ Конгресӗн возванине тата Конгресс пилӗк аслӑ державӑн правительствисене чӗнсе каланине ырланӑ. Совет ҫамрӑкӗсен организацийӗсене Конгресӑн ҫав документчӗсене ырлама чӗнсе каланӑ.

Совет сессийӗн итогӗсем ҫинчен каласа, Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн генеральлӑ секретарӗ Жак Дени Совет ҫирӗплетнӗ решенисем пысӑк, вырӑн йышӑнса тӑнине палӑртнӑ. Вӑл решенисем мӗнпур ҫӗршывсенчи ҫамрӑксен анлӑ сийӗсене мирпе хӑйсен прависемшӗн кӗрешме малалла пӗтӗҫтерме пулӑшаҫҫӗ.

Жак Дени Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн Совечӗн сессийӗ хупӑнни ҫинчен пӗлтернӗ.

Иранра Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн членне хӗсӗрлени

ТЕГЕРАН, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Иранри миршӗн тӑракансен общестивин органӗ «Маслахат» хаҫат тӗнӗн паллӑ лидерӗн Боргаин телеграммине пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл телеграммӑна ҫӗршывӑн генеральлӑ прокурорӗ тата меджлис депутачӗсем патне янӑ пулнӑ. Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн членӗ пулса тӑнӑ май, Борган халӑхсен мире хӳтӗлес тӗлӗшпе пулса иртнӗ Конгресӗн ӗҫне хутшӑннӑ. Венӑран таврӑннӑ хыҫҫӑн ӑна тытса чарнӑ, вара Кум хулинчен кӑларса янӑ.

Хӑйӗн телеграмминче Борган полицие правительство влаҫӗсем иртӗхнине хирӗҫ протестлет.

«Маслахат» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Шахи хулинчи рабочисем 200 ҫын ытла Боргаине хӗсӗрленине хирӗҫ протестленӗ. Вӗсем хӑйсен протестӗнче Боргаине хӗсӗрлес ӗҫе пуҫаракансене наказани пама требовани лартаҫҫӗ.

Ҫурт-йӗрсӗр тата ҫӑкӑрсӑр

АФИНӐРИ ХАҪАТСЕМ ГРЕЦИРИ ӖҪҪЫННИСЕН ПУРНӐҪӖ ҪИНЧЕН

АФИНЫ, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). «Атинаики» хаҫат Грецире апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсен хакӗсем вӗҫӗмсӗр ӳссе пыни ҫинчен ҫырать. 1938 ҫулхипе танлаштарсан, ҫӑкӑр-какай тата атӑ-пушмак хакӗсем 1.000 хут, ӳсентӑран ҫӑвӗпе пир-авӑр хакӗсем — 900 хут, ытти таварсем — вӑтам шутпа 400 хут ытла ӳснӗ. Ҫав вӑхӑтрах рабочисен ӗҫ укҫи вӑтам шутпа 308 хут кӑна ӳснӗ. «Миллионшар ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ, — тесе ҫырать хаҫат, — питех те начарланса ҫитнӗ. Апла пулин те таварсен хакӗсем кунтан-кун ӳссе параҫҫӗ».

«Аллаги» хаҫат «Ҫурт-йӗрсӗр пурӑнакансен йывӑр пурнӑҫӗ» ятлӑ статьяра ҫапла ҫырать: «Фтиотида облаҫӗнче ҫурт-йӗрсӗр пурӑнакан 1.000 ытла ҫемьене регистрациленӗ». Янины хулин мэрӗ каланӑ тӑрӑх, «пӗррешӗш категорири чухӑнсен» хисепӗ 10.000 ҫынна ҫитет. Вӗсене васкавлӑ пулӑшу кирлӗ. Хулара пурӗ те 33.000 ҫын кӑна пурӑнать. Ку хулара вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче юхӑннӑ 5.000 хресчен пурӑнать. Ҫак хресченсен ҫурт-йӗр кӑна мар, ҫӑкӑр та ҫук. Вӗсем выҫӑпа аптраҫҫӗ.

«Аллаги» хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, ҫӗршыври мӗнпур районсенче лару-тӑру ҫакӑн пек йывӑр пулни палӑрать.

США-ра ӗҫсӗрлӗх ӳсет

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер США-н суту-илу министрӗ Уикс хаҫатра пичетлесе кӑларма перепись бюровӗн отчетне панӑ. Унта ҫакна кӑтартса панӑ: декабрьтен пуҫласа январь уйӑхӗччен ялхуҫалӑхӗпе ҫыхӑнман ӗҫсенчи рабочисен хисепӗ 740 пин ҫын чухлӗ чакнӑ. Ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсен хисепӗ те 245 пин ҫын чакнӑ.

СИРИРЕ ПРОГРЕССИВЛӐ ҪЫНСЕНЕ ХӖСӖРЛЕҪҪӖ

БЕЙРУТ, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Ливанри «Ас-Сарха» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Октябрь революцийӗ 35 ҫул тултарнине асӑнса Дамаск хулинче иртternӗ демонстраци участникӗсене суд тунӑ. Айӑпланакансем судра сӑмах тухса каланӑ. Унта вӗсем Сирие ҫӗнӗрен оккупацилемелли империалистла плансене тата Сирирен вӑрҫӑпа агресси плацдармӗ туса хунине тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Айӑпланакансем ҫапла каланӑ: вӗсем Октябрь революцийӗ 35 ҫул тултарнине уявлани Сири халӑхӗ хӑйӗн аслӑ туспе — Совет Союзне — пӗтӗм тӗнчери мирӗн тӗрекне тата ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑхшӑн пыракан кӗрешӳре халӑхсене хӳтӗлесе тӑракана юратса хисепленине пӗлтерет.

Айӑпланакансем ҫакна паллӑ тунӑ: Совет Союзӗ пӗр хутчен кӑна мар ырӑ кӑмӑллӑ позици йышӑннӑ. Вӑл арабсене ирӗклӗхшӗн, империализма хирӗҫ пыракан кӗрешӳре пулӑшса пынӑ, Сири, Ливан тата ытти араб ҫӗршывӗсене хирӗҫ тунӑ империалистла проектсемпе каварсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ.

Суд 9 айӑпланакана ултӑ уйӑхлӑха тата 3 ҫынна икӗ уйӑхлӑха тӗрмене хупма приговор йышӑннӑ. Айӑпланӑ ҫынсене пурне те штраф тӳлеттермелле тунӑ.

ҪАР МАТЕРИАЛӖСЕНЕ ТИЕМЕН

ПАРИЖ, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). «Юманите» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Бордори докерсем «Сафи» ятлӑ транспорт ҫине ҫар материалӗсем тиеме килӗшмен. «Сафи» транспортӑн Касабланка хулине каймалла пулнӑ. Суднӑсен компанийӗн администрацийӗн ҫар материалӗсем тиенӗ ҫӗрте ҫар чаҫӗпе усӑ курмалла пулнӑ.

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ШАХМАТ ТУРНИРӖНЧЕ

БУХАРЕСТ, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Паян иртнӗ вӑййӑсенче выляса пӗтермен партисене выляса пӗтернӗ. Рэдулеску (Румыни) выляма пуҫламасӑрах Толуша (СССР) парӑннӑ. Петросян гроссмейстер (СССР) Троянескуран (Румыни), Спасский (СССР) — Ш. Саборан (Румыни), Чоколтя (Румыни) — Шайтартан (Чехословаки) выляса илнӗ. Филипп (Чехословаки) Бардана (Норвеги), Милев (Болгари) — Троянескуна (Румыни), Польша мастерӗ Слива — Голомбека (Англи), Голомбек — Рейхера (Румыни) ҫӗнтернӗ.

Февралӗн 12-мӗшӗнче 11-мӗш вӑййӑ пулать.

С. И. Ухватов

1953 ҫулхи февралӗн 9-мӗшӗнче, йывӑр чирлесе выртнӑ хыҫҫӑн, пуҫламӑш тата вӑтам шкул работникӗсен профсоюзӗн Чӑваш область комитечӗн председателӗ, Облпрофсовет президиумӗн членӗ, ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн депутачӗ, Ленин—Сталин партийӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ Сергей Игнатьевич Ухватов вӑхӑтсӑр вилчӗ.

С. И. Ухватов 1905 ҫулта Чӑваш АССР-ӗнчи Сӗрпӳ районӗнчи Иваново ялӗнче ҫуралнӑ. Вӑл ҫамрӑкранпах халӑха вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫленӗ. С. И. Ухватов 1927 ҫултан пуҫласа 1949 ҫула ҫитиччен Шупашкар хулинчи шкулсенче учитель, вӗренӳ пайӗн заведующийӗ, унтан шкул заведующийӗ пулса ӗҫленӗ. 1939 ҫулта С. И. Ухватова ертсе пымалли ӗҫе — Шупашкар хулинчи вӗренӳ пайӗн заведующийӗ пулса ӗҫлеме, вара ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗн исполкомӗн председателӗн заместителӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартнӑ. 1941 ҫултан пуҫласа 1946 ҫула ҫитиччен С. И. Ухватов Совет Ҫарӗнче пулнӑ, фронтсенче пулса фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пулнӑ ҫапӑҫусене хутшӑннӑ. 1946—1947 ҫулсенче Чӑвашсен чӗлхе, литература тата истори тӗлӗшпе ӗҫлекен наукӑпа тӗпчев институчӗн директорӗ пулнӑ, 1947 ҫултан пуҫласа пӗрмаях пуҫламӑш тата вӑтам шкул работникӗсен профсоюзӗн обкомӗн председателӗ пулса ӗҫленӗ.

С. И. Ухватов 1941 ҫултанпа Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн членӗ пулнӑ. С. И. Ухватова II-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе, «Хисеп палли» орденӗпе тата виҫӗ медальпе наградӑланӑ.

Сергей Игнатьевичӑн ырӑ ячӗ унӑн юлташӗсемпе Чӑваш республикинчи учительсем ялан асра тытса пурӑнӗҫ.

Юлташӗсен ушкӑнӗ.

Концертсемпе постановкӑсем

Шупашкар хулинчи художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем, суйлав кампанине активлӑ хутшӑнса, суйлав участокӗсенче концертсемпе постановкӑсем параҫҫӗ.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводӑн «Электрик» клубӗнче виҫӗ хор, икӗ драма коллективӗ, икӗ хореографи коллективӗ, халӑх инструменчӗсен оркестрӗ, духовой оркестр ӗҫлет. Кунта пӗтӗмпе художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсене 250 ҫын хутшӑннӑ. Концерт пама ятарласа ҫӗнӗ программа хатӗрленӗ. Программӑра «В коммунизм Великий Сталин нас ведет», «Хорошо», «Сирень цветет», «Пире Сталин ырлӑх пачӗ», «Эпир миршӗн» тата ытти юрӑсем, вырӑс, украина, чӑваш халӑх ташшисем, сӑвӑсемпе частушкӑсем пур. Суйлав кампани пуҫланнӑранпа «Электрик» клубӗ ҫумӗнчи художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем хулари суйлав участокӗсенче 8 хутчен концерт панӑ.

Учительсен ҫуртӗн драма коллективӗ суйлавҫӑсене А. Н. Островскин «Поздняя любовь» пьесине кӑтартать. Ку пьесӑна учительсен коллективӗ тӗплӗн хатӗрленсе, питӗ ӑста лартса пачӗ. Коллектив руководителӗ, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗ А. А. Дуняк спектакль лартас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫленине палӑртмалла. Драма коллективӗ ҫак пьесӑна 5-мӗш суйлав участокӗнче икӗ хут лартса панӑ.

«Металлист» артелӗн хорӗ (руководителӗ Б. В. Мазохин) суйлавҫӑсем валли 4 хутчен концерт панӑ. Концерт программинче «Песня о Сталине» (Ревуцкий музыкӗ) «Сережа-тракторист» (Васильев-Буглай музыкӗ), «Наш город» (Соловьев-Седой музыкӗ), «Хорошо весной на Волге» (Макаров музыкӗ) — пӗтӗмпе 16 юрӑ.

Ҫавӑн пекех суйлавҫӑсем валли концертсемпе постановкӑсем парас тӗлӗшпе «30 лет ЧАССР» тата Текстильстрой клубӗсен, Ҫыхӑну управленин, Прокуратурӑн, Аптекоуправленин, пир-авӑр фабрикин, институтсемпе техникумсен тата вӑтам шкулсен художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем аван ӗҫлеҫҫӗ.

Н. АМУРЦЕВ.

Пӗлтерни

Февралӗн 11-мӗшӗнче, 20 сехетре, партин хула комитечӗн библиотека ҫуртӗнче докладчиксемпе агитаторсем валли инструктивлӑ доклад пулать. Тема: «Совет Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗн кунӗ».

Докладчик — И. М. Васькин юлташ.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ

Паян, февралӗн 11-мӗшӗнче, чӑвашла спектакль

«АЙДАР»

Ыран, февралӗн 12-мӗшӗнче, кӑнтӑрла тата каҫхине, вырӑсла спектакль

«БОГАТЫРСКИЙ СКАЗ»

Эрнекун, февралӗн 13-мӗшӗнче, вырӑсла спектакль

«НЕВОЛЬНИЦЫ»

Кӑнтӑрлахи спектакльсем 12 сехетре, каҫхи спектакльсем 20 сехетре пуҫланаҫҫӗ

„Айдар“ драма 25 ҫул театр сцени ҫинче

Февралӗн 11-мӗшӗнче Чӑвашсен государство академи театрӗ П. Н. Осиповӑн «Айдар» драмине сцена ҫинче лартма пуҫланӑранпа 25 ҫул тултарать. Ӑна театр 479-мӗш хут кӑтартать. Театр историйӗнче ҫакӑн пек нумай выляса кӑтартнӑ пьесӑсем сайра тӗл пулаҫҫӗ. «Айдар» драмӑна Чӑвашсен академи театрӗнче кӑна мар, колхоз театрӗнче те, драмкружоксенче те сахал мар лартса кӑтараҫҫӗ.

Мӗншӗн-ха 1923—1925 ҫулсенчех ҫырнӑ драма халӗ те куракансен чӗрине хумхантарма пӑрахмасть? Ҫакна ӑнланса илме пире КПСС Центральлӑ Комитечӗ юлашки ҫулсенче идеологи тӗлӗшпе йышӑннӑ постановленисем питех те такӑр ҫул уҫса пачӗҫ. Ҫав постановленисенче кӑтартнисенчен пӗри вӑл пирӗн писательсен художествӑллӑ произведенисем ҫырнӑ чухне вырӑссен аслӑ писателӗсенчен вӗренсе пымалла, тени пулса тӑрать.

П. Н. Осипов «Айдар» драмӑна ҫырма пуҫличчен чылай вӑхӑт хушши театрта ӗҫленӗ, классикӑллӑ произведенисемпе тимлӗн паллашнӑ, Островскин, Гоголӗн, Л. Толстойӑн хӑшпӗр пьесисене чӑвашла куҫарнӑ, нумай рольсене чӑваш сцени ҫинче хӑех выляса кӑтартнӑ. Кайран П. Н. Осипов хӑй те пьесӑсем ҫырма тытӑннӑ. Паллах, ҫапла ӗҫлени унӑн творчествинче тарӑн йӗр хӑварнӑ, ҫырас ӗҫре ӑна классикӑллӑ произведенисем хӑвхалантарнӑ. Ҫапла вара «Айдар» драма аслӑ писательсенчен вӗренсе, вӗсен пысӑк кӗлӗтпине сӑнаса ҫырнӑ произведени. Паллах, автора хӑй сцена ҫинче ӗҫлени, сцена меслечӗсене тӗплӗн пӗлсе ҫырни те чылай пулӑшнӑ.

Партин Центральлӑ Комитечӗ пире илемлӗ произведенисем ҫырас ӗҫре пурнӑҫри чи ҫивӗч, тӗп ыйтусене татса паракан япаласем ҫинчен ҫырмалла, тесе асӑрхаттарать.

«Айдар» драмӑна ку енчен илсе пӑхсан, унӑн паха енӗсене тата уҫҫӑнрах курма пулать. Чӑнах та, мӗнле чи ҫивӗч, тӗп ыйтусем пулнӑ-ши чӑвашсен пурнӑҫӗнче XVIII-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче? Паллах, калама ҫук ҫивӗч класлӑ кӗрешӳ пулнӑ. Чӑваш хресченӗсем, Пугачев ҫарне хутшӑнса, помещиксен пусмӑрне хирӗҫ хастарлӑ ҫапӑҫнине эпир историллӗ наука кӑтартнинчен ҫеҫ мар, ҫав ҫапӑҫу ку таврара материаллӑ тӗслӗхсем хӑварнинчен те лайӑх пӗлетпӗр. Пугачев ҫарне пусарнӑ хыҫҫӑн та чӑваш хресченӗсем чылай вӑхӑт хушши патша тарҫисене, миссионерсене хирӗҫ тухса ҫапӑҫнӑ. Шӑп ҫак вӑхӑта кӑтартса парать те ӗнтӗ «Айдар» драма. Чӑвашсем хушшинче, драмӑри пекех Айдар ятлӑ улпут пулнине татсах калама ҫук пулсан та, автор пире ҫав вӑхӑтри класлӑ кӗрешӗве тӗрӗс ӳсатса парать. Автор ҫав вӑхӑтри пурнӑҫа лайӑх пӗлнине драмӑра чӑвашсен авалхи йӑлисене туллин кӑтартнинчен те курма пулать.

Драма вӑл пурнӑҫра пулакан ҫивӗч конфликт ҫинче тытӑнса тӑмалла. Конфликт унӑн тӗп никӗсӗ, — тенӗ «Правда» хаҫатри «Драматурги пурнӑҫран юлса пынине пӗтермелле» ятлӑ редакци ҫырнӑ статьяра. Ку енчен илсен те «Айдар» драма иртнӗ саманари пурнӑҫӑн чи ҫивӗч конфликчӗ ҫинче тытӑнса тӑрать. Класлӑ обществӑра чухӑнсемпе пуянсем хушшинче хаяр кӗрешӳ пынине, килти деспотла йӗркесем уйрӑммӑнах хӗрарӑмсемшӗн чӑтма ҫук йывӑр пулнине, чухӑнсем телейлӗ пурнӑҫпа ирӗклӗх шыранине, уншӑн кӗрешнине автор хӑйӗн драминче лайӑх кӑтартса панӑ. Вӑл ӑна чун-чӗререн хумханса, конфликтсене ҫивӗчлетсе, драматурги меслечӗсене тӗплӗн пӗлсе ҫырнӑ.

Куракансене «Айдар» драмӑра пуринчен ытла положительнӑй геройсем Сентиерпе Пинерпи хумхантараҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен таса ӗмӗчӗсене пурнӑҫлассишӗн, тӗрӗслӗхшӗн, ирӗкшӗн, таса юратушӑн, нимӗнле йывӑрлӑхсенчен те, вилӗмрен те хӑрамасӑр, хастарлӑ ҫапӑҫаҫҫӗ. Ахальтен мар спектакль куракансем вӗсен ҫутӑ ӗмӗчӗсем пурнӑҫланассине пӗтӗм чун хавалӗпе кӗтсе лараҫҫӗ, пуянсемпе куштансене хирӗҫ хӑюллӑн тӑма вӑй ҫитернишӗн хавасланса алӑ ҫупаҫҫӗ. Куракансем ҫав вӑхӑтрах пуянсемпе куштансене, тискер те хӑрушӑ ӗҫ тӑвакансене ылханаҫҫӗ. Паллах, вӑл вӑхӑтра чухӑнсем пуянсене тӗпренех ҫӗнтерме пултарайман, анчах та чухӑнсем ӗмӗр тӑршшӗнех ирӗкшӗн кӗрешни усӑсӑр пулман. Ҫав кӗрешӳ пусмӑр тӗнчине чӗтретмеллипех чӗтретнӗ, пулас ирӗклӗ кун-ҫула ҫывхартнӑ.

Ҫапла вара драмӑн паха енӗ чухӑнсем пусмӑра хирӗҫ хастарлӑ кӗрешнине кӑтартни, кӗрешӳре тӳрӗ те чӑтӑмлӑ пулма вӗрентни пулса тӑрать. Автор ку драмӑра пире калама ҫук тӳрӗ, таса чунлӑ, пысӑк та вӗри чӗреллӗ чухӑнсене сӑнласа парать. Ҫав вӑхӑтрах «Айдар» драма пире ӗлӗкхи пусмӑр тӗнчине, пуянсемпе куштансене, вӗсен аскӑнлӑхне, чеелӗхне, сутӑнчӑклӑхне чунтан кураймасӑр тӑма вӗрентет.

«Айдар» драмӑн паха енӗсем ҫаксем ҫеҫ тесшӗн мар эпир. Унӑн пахалӑхӗ автор ӑна ӑшри вӗри туйӑмсемпе ҫырнинчен те килнӗ. Вӗресе тӑракан чунпа ҫеҫ образсен шалти туйӑмӗсене уҫҫӑн кӑтартма пулать. Автор хӑйӗн образӗсене сӑнпит енчен те, чӗлхепе шухӑш-кӑмӑл енчен те кашнинех хӑйне тивӗҫлӗ уйрӑмлӑхсем урлӑ витӗмлӗ кӑтартнӑ.

«Айдар» драмӑра хӑшпӗр ҫитменлӗхсем те ҫук тесшӗн мар эпир. Малтан пичетлесе кӑларнӑ кӗнекене халӗ театрта лартнипе ташлаштарса пӑхсан, вӗсен хушшинче чылай уйрӑмлӑхсем пур. Малтанхи хут лартнӑ драмӑра чухӑн ҫынсем мӗнле пурӑннине сахалтарах кӑтартнӑччӗ. Автор, театрпа пӗрле ӗҫлесе, ку ҫитменлӗхсене нумай пакарчӗ.

«Айдар» драма 25 ҫул хушши сцена ҫинче пулни чӑваш драматургийӗшӗн те, чӑваш театрӗшӗн те питӗ чыслӑ факт. Ытларах пултӑрччӗ ҫавӑн пек халӑх кӑмӑлне каякан, пурнӑҫа тӗрӗс кӑтартакан ҫӗнӗ пьесӑсем, тетпӗр эпир.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци пирӗн ҫӗршыври халӑхсене ирӗке кӑларнӑранпа чӑваш халӑхӗ те хӑйӗн литературипе искусствине кирлӗ пек аталантарма аслӑ ҫул ҫине тухрӗ. Чӑваш театрӗ те, чӑваш драматургийӗ те унтанпа пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн талантлӑ ывӑл-хӗрӗсемпе тивӗҫлипех мухтанма пултарать. «Айдар» драма вӑл чӑвашсен искусство ӳсӗмӗнчи ҫитӗнӗвӗсенчен пӗри пулса тӑрать.

К. ИВАНОВ,
Чӑваш театрӗн главнӑй режиссерӗ, Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ.

Редакторшӑн М. Н. ЯКИМОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ 7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00991 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.